Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

1938
АПРЕЛ
2
ШАМАТКУН
75 (4888)-мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Партилĕ-политикăлă ĕçĕн çĕнĕ çĕкленĕвĕ патне!

Пайан эпĕр ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ **„Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен"** йышăннă постановленине пичетлесе кăларатпăр. Çывăх кунсенчех пирĕн мĕн пур парти организацисем отчотпа суйлав кампанине ирттерме пуçлаççĕ. 1938 çулхи апрел уйăхĕнчен пуçласа июнĕн пĕрремĕш çуруйăхлăхне çити тапхăрта мĕн пур парти организацисенче, пуçламĕш организацисенчен тытăнса облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи организацисем таранах, суйлавсем пулса иртĕççĕ.

Парти органĕсене йулашки хут суйланăранпа çулталăк иртрĕ. Çак çулталăк хушшинче пирĕн çĕршыв пурнăçĕнче те тата пирĕн парти пурнăçĕнче те пысăк событисем пулчĕç. Çак çулталăк хушшинче совет çĕршывĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социалисăмлă демократисăмăн çĕнĕ пусăмне çĕкленчĕ: тĕнчере чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕ суйланă. Историлĕ çĕнтерӳ тунă—коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ. Çак блок, совет халăхĕн моралĕ тата политикăлă пĕрлĕхне палăртса тăракан блок, пирĕн çĕршывра калама çук аслă вăйлă пулса тăчĕ, вăл большевикла парти массăсемпе никам уйăраймин çирĕп çыхăнса тăнине ĕнентерсе парать. Парти авторитечĕ—социалисăмлă стройа тĕреклетессишĕн кĕрешнĕ çĕрте ĕçсынисен малта пыракан отрйачĕн авторитечĕ çав тери пысăккăн ӳсрĕ.

Çак çулталăк хушшинче парти тавра нумай йышлă çĕнĕ актив ӳсрĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче çĕршыв партири тата партире тăман çĕршер пин агитатăрсене, пахха пропагандиссене, лайăх ĕçлекен организатăрсене пĕлчĕ. Партири тата партире тăман вуншар пин большевиксене государствăн йертсе пыракан ĕçĕсене лартнă. Çĕнĕ работниксене—çамрăк, талантлă работниксене—хăйулăн ĕçе лартни пирĕн партипе совет тата хуçалăх организацисене çирĕплетрĕ, массăсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне ӳсме татах та ытларах майсем уçса пачĕ.

Иртнĕ çулталăк хушшинче парти, Сталин йулташ кăтартса панисемпе хĕспăшалланса, контрреволюцилĕ троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионла йăвасене çĕмĕрсе тăкас йенĕпе пит пысăк ĕç туса ирттерчĕ, парти тата государствă аппаратне икĕпитлисемпе сутăнчăксенчен тасатрĕ. Парти аппаратĕнчен, унта шăвăнса кĕнĕ фашисла сволăчсене тимĕр шăпăрпа шăлса кăларнă. Партилĕ ĕçе пиншер калама çук чаплă большевиксем пычĕç, вĕсемшĕн пурнăçри чи аслă тĕллев,—Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн иксĕлми кĕрешесси пулса тăрать. Парти работникĕсен çĕнĕ отрйачĕ партилĕ ĕçе вăйлатассишĕн, массăсемпе çыхăну тытассине çирĕплетессишĕн, маскăпа витĕннĕ тăшмансен, карйериссен, перестраховщиксен ирсĕр ĕçĕсемпе тунă сийене пĕтерсе хурассишĕн хĕрӳлĕн ĕçе тытăнчĕç. Парти органĕсен пулас суйлавне парти пĕршухăшлăн, пĕрлĕхлĕн, Сталинла Тĕп Комитет тавра таччăн пĕтĕçнипе пырса кĕрет.

Пулас суйлавсенчи чи пысăк задачă вăл—**„партин йертсе пыракан органĕсене çителĕклĕ тĕрĕсленнĕ, пирĕн партишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ тата коммунисла парти ĕçне вĕçне çитиех сыхласа тăма пултаракан большевиксене суйласа хăварасси пулать".**

Парти органĕсене социалисăмшăн кĕрешнĕ çĕрте хăйсене ĕçре кăтартнă, тӳрĕ кăмăллă, шиксĕр, Сталинла Тĕп Комитета вĕçне çитиех парăннă большевиксене суйлас пулать. Парти органĕсене суйланă чухне кашни парти организацин, кашни коммунисăн кадрсене суйласа илмели ленинла-сталинла принцип тăрăх ĕçлесе пымала: пĕрремĕшĕнчен, çак работнике политикă йенчен шанма йурать-и тата иккĕмĕшĕнчен, ăна хушнă ĕçе тума пултарать-и вăл. Çакăн пек принципла пăхни çеç чи тивĕçлĕ, социалисăм ĕçне чи парăннă работниксене суйласа илме май парать. Çакăн пек большевикла çӳлĕ принциплăх çеç парти организацисене йутçынсемпе обывателсенчен, ăнсăртран лекнĕ тата шанчăксăр етемсенчен, тăшманла лазутчиксенчен сыхласа хăварать. Парти туса ирттернĕ тасатулă ĕçрен тухса тăракан тĕп вывăдпа тĕп урок вăл,—парти органĕсене суйлама кандидатурăсем тăратнă тата суйланă чухне, парти кадрĕсене суйласа илнĕ чухне коммуниссен **сыхăлăхне** пур майсемпе те хăпартасси пулать.

Çĕнĕ суйлавсем, большевикла критикăпа самокритикăна хăйулăн сарса пынă пикĕс çинче парти ăшĕнчи демократине çирĕппĕн пурнăçа кĕртни парти аппаратне парти органĕсене ăнсăртран кĕрсе кайнă сутăнчăксенчен, хитре сăмахсемпе пăврама йуратакансенчен, сăмахĕ ĕçĕнчен уйăрăлса кайакан çынсенчен тĕппипех тасатма пулăшĕç.

Демократилĕ централисăмăн большевикла принципĕ партин мĕн пур йертсе пыракан органĕсене çӳлтен пуçласа айала çитиех суйламаллине пĕлтерет çеç мар, тата парти органĕсем хăйсен организацийĕсен умĕнче обязательнă йеркепе вăхăтран вăхăта отчот тумалине те пĕлтерет. Çавăн пек отчот тунинче—парти кадрĕсене айалтан пахан тĕрĕслени пулать, ун çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралĕти-мартри Пленумĕнче Сталин йулташ çапла каланă:

„Парти массисем хăйсен руководителĕсене, активсенче, конференцисенче, съессенче вĕсен отчочĕсене итленипе, çитменлĕхсене критикленипе, йулашкинчен, ку йе тепĕр йертсе пыракан йулташсене йертсе пыракан органсене суйланипе йе суйламаннипе тĕрĕслеççĕ".

Отчот туни, суйлавсем пекех, большевикла критикăпа самокритикăна çул уçса парать, çавăнпа та вăл ку йе тепĕр организацин ĕçĕнче ĕç чарăнса ларнипе хирĕç, хăйне хăй лăпланса ларнипе, мăнаçланса кайнипе тата хăйне хăй йăпатса ларнипе хирĕç кĕрешмели çивчĕ хĕçпăшал пулса тăрать. Отчот туни вăл—тимĕсĕрлĕхе пĕтермели чи кирлĕ майсенчен пĕри, сыхлăха пур майсемпе те ӳстермели, пирĕн кадрсен çапăçу пултарулăхне тĕрĕслемели парти массисене активлантармали май. Акă мĕншĕн кашни парти руководителĕ парти масси умĕнче хăйĕн ĕçĕ çинчен, парти директивĕсене пурнăçа кĕртни çинчен тӳррĕн те туллин отчот туса пани паха пулса тăрать.

„Партин йертсе пыракан органĕсене суйласси партилĕ-политикăлă ĕçе малашне те пур майсемпе те хăпартса пырассишĕн, парторганизацисем массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетессишĕн тата парторганизацисен умĕнче тăракан политикăлă-хуçалăхлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнипе пулса иртмеле".

Тĕп Комитетăн çак кăтартăвĕнчен пĕтĕм партилĕ-массăлă, агитацилĕ-пропагандăлă ĕçе чĕртесси çинчен вывăд тăвас пулать. Оборонă ĕçне, массăсене интернационаллă воспитани парассине вăйлатмала. Кашни парторганизацин идейăлă пурнăçне çӳлĕ пусăма хăпартмала. Парти организацисен чи малтанах ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ йышăннă решенисене вĕçне çитиех пурнăçа кĕртмеле, парти ĕçĕнче парти членĕ çине уйрăмăн пăхассине тĕп вырăна хумала.

Çуракине ăнăçлăн ирттересси, промышленнăç ĕçне малашне те лайăхлатса пырасси, халăх хуçалăхĕн мĕн пур участкисенче государствă планĕсене тултарса пырасси — кашни парти организацийĕ большевикла татса памали задачсем çакăн пек ĕнтĕ. Партин политикăлă тата хуçалăхлă директивĕсене пурнăçа кĕртни, советăн тăван çĕршывне ырă тăвас тесе чунтан-чĕререн йуратса та тăрăшса ĕçлени — кашни парти руководителĕ партин йертсе пыракан органĕсене çĕнĕрен суйланас правана акă мĕнпе çĕнсе илме пултарать ĕнтĕ.

Пĕр кун та вăраха йамасăр, парти организацисене парти ăшĕнчи политикăлă пысăк событи тĕлне мобилизацилес пулать, ун пек пысăк событи вăл парти органĕсен суйлавĕсем пулса тăраççĕ. Массăсен политикăлă активлăхĕпе революцилĕ сыхăлăхне çĕклемеле, кашни коммуниса суйлавсен йĕркипе паллаштармала, парти массисене суйлавсене организацилĕн ирттерме хатĕрлемеле. Партин йертсе пыракан органĕсене чи çирĕп, хăйсене шеллемесĕр кĕрешекен большевиксене, Сталинла Тĕп Комитета вĕçне çитиех парăннă, парти ĕçĕ, коммунисăм ĕçĕ çĕнтерессишĕн хăйсен пĕтĕм вăйĕсене, кирлĕ пулсан, пурнăçне те пама хатĕр тăракан большевиксене суйлас пулать, тата, иккĕленмели çук, çавăн пек большевиксене суйлĕç те.

(„Правда" умçтатйи).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕ

Мартăн 28-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ,—лару председателĕ **В. М. Молотăв** йулташ пулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти çентаберĕн 16-мĕшĕнче пусма-тавар промышленнăçĕн оборудованине йусасси тата ăна валли запаслă пайсем парса тăрасси çинчен йышăннă постановленийе Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕ мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен, çавăн пекех тата Машиностройени промышленнăç Халăх Комиссариачĕн пусма-тавар промышленнăçĕ валли запаслă пайсем туса кăларакан савăчĕсен ĕçĕсем çинчен Совет Контроль Комиççи председателĕн заместителĕ Беленький йулташ докладне итленĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ—пусма-тавар тĕртекен хапрăксен оборудованине йусасси тата Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн предприйатийĕсене валли запаслă пайсемпе детальсем туса кăларас ĕçе организацилесси йулашки вăхăтра кăштах лайăхланнине палăртнă. Нумай предприйатисенче аслă инженерсене, ремонт-механически пайсен начальникĕсене ĕçе лартнă, ремонт бригадисене пухса çитерне, т. ыт. те.

Анчах, Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти çентаберĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумали ĕçсене пурне те туман; оборудованине йусасси пусма-тавар хапрăкĕсенче халĕ те хĕсĕк вырăн пулса тăрать-ха. Ку вăл çакăнтан та лайăх курăнать. 1937 çулти 4-мĕш кварталта оборудованине сыхлама ремонт тăвас ĕç чылай хапрăксенче арканса кайнă (Измайлăвкă хапрăкĕ оборудованине сыхлама ремонт тумали плана 35 процент, Ногин йачĕпе тăракан хапрăк—27 процент, Занар хапрăкĕ—43 процент, „Красные текстильщики" хапрăкĕ—44 процент çеç тултарнă).

Ремонт пахалăхне нумай лайăхлатмала.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссарне Шестаков йулташа пусма-тавар промышленнăçĕн оборудованине йусас ĕçре Совет Контроль Комиççи палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

Машиностройени промышленнăç Халăх Комиссариачĕн пусма тавар промышленнăçĕ валли запаслă пайсем туса кăларакан савăчĕсем те хăйсен ĕçĕсене кăшт лайăхлатнă, анчах программăна тултармаççĕ, вĕсен продукци пахалăхĕ çителĕклĕ мар. Çапла, тĕслĕхрен, Енгелс йачĕпе тăракан савăтра веретĕннăй шпинделсене 172 пин штук туса кăларнă та, 43 пин штукне бракланă, Маркс йачĕпе тăракан савăтра ватернăй ункăсене 170 штук туса кăларнă та, 46 пин штукне бракланă.

Машиностройени Халăх Комиссариачĕ çавна тӳрлетес тĕлĕшпе вăхăтра кирлĕ ĕçсем туман, уйрăмăн илсен савăтсене сырйо, полуфабрикатсем тата кирлĕ оборудованисене вăхăтра паман.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Машиностройени Халăх Комиссариачĕн савăчĕсем пусма тавар промышленнăçĕ валли запаслă пайсем туса кăларассине кăштах лайăхлатнине паллă туса, пĕрремĕш кварталра запаслă пайсемпе детальсем туса кăларма çирĕплетнĕ программăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Машиностройени Халăх Комиссариачĕ тунă ĕçе çителĕксĕр, тесе шутланă. Машиностройени Халăх Комиссарне Брускин йулташа Совет Контроль Комиççи кăтартса панă çитменлĕхсене, уйрăмăнах туса кăларакан запаслă пайсемпе детальсен пахалăхĕ пирки тата запаслă пайсен бракне пĕтерес йенĕпе кăтартса панисене шута илме хушнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сикекен **чирсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе сыхланулă ĕçсем тăвасси çинчен.** ССР Сойузĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн государствă санитари инспекторĕн Йолкин йулташăн докладне итленĕ.

Ку ыйту тăрăх ССР Сойузĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Болдăрĕв йулташ тăратнă сĕнĕве практикă йенĕпе тата сывлăха сыхлав ĕçĕн вырăнти органĕсен ĕçне пĕлсе тăрас йенĕпе, ĕçĕн политикăлă йенĕ çинчен каламасăр та, йурăхсăр, тесе шутланă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне тĕплĕн хатĕрленĕ доклад тата саралакан чирсене хирĕç кĕрешес ыйту тăрăх хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратма, государствă санитари инспекторне хăйĕн ĕçĕ çинчен отчот тăратма хушнă.

Унтан Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарĕ Глинский йулташ тунă доклад тăрăх, ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн положени пройектне пăхса тухнă.

1934 çулта тунă Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ халĕхи вăхăтра хăйĕн системинче, çăнăх тата кĕрпе авăртакан промышленнăçсемсĕр пуçне, апат-çимĕç промышленнăçĕн пур отраслисене те пĕрлештерсе тăрать. Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариатне пăхăнса тăракан Сойузри тата республикăсенчи предприйатисем 8.500 шутланаççĕ. Апат-çимĕç промышленнăç системинче 1.100 пин çын ĕçлеççĕ. ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн курттăмăн тата ваккăн суту-илӳ тăвакан магазинсем, ларйоксем, базăсем нумай. Правительства 1938 çул валли çирĕплетнĕ план тăрăх Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн пĕтĕм продукцийĕ 1926—27 çулхи улшăнман хакпа 14.100 мĕлйун тенкĕлĕх пулмала. Республикăсенчи тата вырăнти предприйатисен продукцийĕн виçи çак пĕтĕм продукци хисепĕнче 37 процент пулать.

ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ çинчен хатĕрленĕ положени пройекчĕ ăна сойузлă-республикăлă халăх комиссариачĕ вырăнне хурать. ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ сойузлă республикăлă тата вырăнти апат-çимĕç промышленнăçне йертсе пырать.

Апат-çимĕç промышленнăçĕн сойузри предприйатийĕсене, çавăн пекех республикăсенчи предприйатийĕсене сойузлă республикăсен халăх комиссариачĕсем урлă тытса тăма Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн составĕнче 25 тĕп управлени тунă. Тĕп управленисенче производствăлă распорйажени паракан пайсем, техникăлă тата ытти пайсемпе сектăрсем тăваççĕ, республикăсенчи тата вырăнти предприйатисене йертсе пыракан тĕп управленисенче тивĕçлĕ отраслĕсенче—республикăлă промышленнăç пайĕсем тăваççĕ.

Вырăнсемпе çыхăну тытма, пĕрпĕрин опычĕсемпе паллашма халăх комиссарĕ çумĕнче Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн Совечĕ пулать.

ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ çинчен тăратнă положенине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тĕпрен илсен çирĕплетнĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938—1939 **вĕренӳ çулĕнче Аслă шкулсенче вĕренме мисе çын илес ыйтăва** Аслă Шкулсен Комитечĕн председателĕ Кафтанăв йулташăн доклачĕ тăрăх пăхса тухнă.

Социалисăмла хуçалăх ӳссе пынипысăк квалификацилĕ специалиссене ытларах та ытларах ыйтать. Аслă Шкулсен Комитетне пăхăнса тăракан аслă шкулсенче халĕхи вăхăтра 481.500 студент вĕренет. 1937 çулта аслă шкулсене вĕренме 126.800 çын илнĕ. 1938—39 вĕренӳ çулĕнче Аслă Шкулсен Комитечĕ 150 пин çынна вĕренме илме палăртнă.

Индустрилĕ-техникăлă тата йалхуçалăхĕн аслă шкулĕсене вĕренме илесси уйрăманах ӳсет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Аслă Шкулсен Комитечĕн сĕнӳне тĕпрен илсен çирĕплетнĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссарĕ Зверĕв йулташăн доклачĕ тăрăх, **ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн контроль-ревизи управленин положенине пăхса тухнă.** Ку таранччен финанс халăх комиссариачĕ государствă учрежденисемпе организацисен финанс ĕçне бӳджет инспекци урлă контроль туса тăнă. Бӳджет инспекцийĕ бӳджет управленин пĕр пайĕ çеç пулнă, вăл иккĕмĕш вырăнта тăракан ыйтусемпе çеç ĕçленĕ, правительства финанс ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă решенисене финанс органесем тата советсен ытти органĕсем мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемен. Бӳджет инспекци вырăнти финанс органĕсене пăхăнса тăнă пирки, вăл час-часах кайала чакнă, финанс дисциплинишĕн кĕрешес ĕçре çирĕп пулайман.

ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн контроль-ревизи ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетес майпа, ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти декаберĕн 23-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн составĕнче контроль ревизи управлени тума решени йышăннă.

Финанс Халăх Комиссариачĕ тăратнă положени пройекчĕ контроль-ревизи управленин тата унăн вырăнти органĕсен прависем мĕнле пулмалине кăтартса парать. Контроль-ревизи управлени тата унăн вырăнти органĕсем пĕрлĕхлĕ центрти системă пулса тăраççĕ, ăна пĕтĕм Сойузри бӳджет шутĕнчен тытса тăмала. (ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Чехословаки çеначĕ фашиссен киревсĕр хăтланăвĕсене отпор пани

Прагăра Чехословаки парламенчĕн (сенатăн тата депутатсен палатин) çар çеççи ларăвĕсем пулса иртеççĕ. Парламентăн пирвайхи ларăвĕсенче националисла фашисла организацисен представителĕсем уйрăм вак халăхсене (нимĕçсене, польаксене, венгерĕçсене) автономи пама ыйтса тухса калаçнă. Çапла ыйтнисене пурнăçа кĕртни вăл Чехословаки халăхне пĕрлĕхлĕ пулнипе вăл никама пăхăнса тăрас маррине пĕтерсе хунă пулĕччĕ, Чехословакине темиçе пĕчĕк государствăна вакласа пайлассине пĕлтернĕ пулĕччĕ, вăл вакă государствăсене фашисла Германи, Польшă, Венгри çăтса йанă пулччĕç.

Республикă никама пăхăнса тăрас маррине пĕтерсе лартассишĕн уççăнах тухса калаçнă фашисла оратăрсене хирĕç коммунис-депутатсем вăйлă отпор панă. Коммунисла партин парламентри ушкăнĕ йачĕпе депутат Широкой правительства çапла чĕнсе каланă: правительствăн хăйĕн ĕçĕнче çĕршыври пĕрлешĕннĕ демократилĕ вăйсем çине тайăнса ĕçлес пулать, тенĕ. Вăл фашисăма хирĕç кĕрешес, Чехословаки никама пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешес тĕлĕшпе фашисăма хирĕç кĕрешекенсен, пĕтĕм демократсен (вĕсем мĕнле нацирен пулнине пăхмасăр) пĕтĕм вăйне пĕр çĕре пĕрлештерме чĕннĕ.

Мартăн 30-мĕшĕнче çенат резолюци йышăннă. Вăл резолюцире çенат çенатăрсем-фашисла партисен представителĕсем чăннипе илсен Чехословакине пайăн-пайăн вакласа йама ыйтнисене татăклăнах пăрса хăварнă.

(ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: Испанири республикă çарĕсен бойецĕсем çапăçусем хыççăн канаççĕ.

(Сойузфото).

Испанири фронтсенче

Мартăн 30-мĕшĕнче Хĕвелтухăçри фронтра çапăçусем ун умĕнхи кунсенчи пекех хайаррăн пулса пынă. Фашиссем, артиллерипе авиаци пулăшнипе, Альккарраз йатлă хулана (Фрагăпа Леридă хушшинче) йышăннă.

Пăлхавçăсемпе интервентсен çарсем тата вăрçă хатĕрĕсем тĕлĕшпе республиканецсенчен чылай малта тăраççĕ пулсан та, республикă çарĕсем вĕсене хирĕç калама çук хыттăн тăраççĕ. Икĕ кун хушши ĕнтĕ тăшманăн малта пыракан чаçĕсен атакисене республикă çарĕсем хайаррăн сирсе пыраççĕ. Республикă çарĕсем Каспе—Алькаңиз патĕнче те пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç вăйлăн тăраççĕ. Кунта итальйанецсен дивизийĕсем малала кайма хăтланаççĕ, анчах республикă çарĕсем вĕсем çине флангран пырса атакăлаççĕ. Вĕсем Теруел участкинче чылай пунктсене йышăннă.

Хĕвелтухăçри фронтра вăрçакан республикă авиацийĕ мартăн 30-мĕшĕнче пăлхавçăсен пĕр çĕреле пухăнса пыракан çарĕсем çине тата вĕсен склачĕсемпе лавĕсем çине питех те ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук. (ТАСС).

Республикăлă Испани валли 12 амбулатори йама йышăннă

Норвегири республикăлă Испанине пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет республикăлă Испани валли 12 амбулатори йама йышăннă.

(ТАСС).

Итали салтакĕсен Кадиксри восстанийĕ

Италин Кадикс хулинче гарнизон службинче тăракан çарĕсем восстани пуçласа йанă. Салтаксене фронта илсе каймала пулнă, анчах вĕсем пойăс çине ларма килĕшмен. Восстанине путарса лартнă. Итали салтакĕсене пурĕ 200 çынна тĕрмене хупнă. Вĕсене, концентрацилĕ лагерсене йама, Италине ăсатаççĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршыв хроники

■■ ССР Сойузĕн Грецири полпречĕ Шаронăв йулташ Хуратинĕс госпароходстви йачĕпе 1937 çулхи çентаберĕн пĕрремĕшĕнче фашисла пиратсем советăн „Благойĕв" пăрахутне путарнă чухне унăн екипажне пулăшнăшăн Грецин „Агиос Николасс" парусник екипажне хаклă парнесем панă.

■■ Йапонин Аомори тĕрминче Манива Суекици вилнĕ. Ăна коммунисла ĕçсемшĕн 10 çуллăх каторгăра ĕçлемеле суд тунă пулнă.

■■ Австрин çар министрĕ пулнă Боннуел Италирен тавăрăнсан, ăна Германи фашисĕсем арĕсленĕ.

■■ Йулашки вăхăтра Чехословакири коммунисла партине çĕнĕ членсем кĕресси вăйланнă. Февраль уйăхĕнче пĕр Карпатлешйĕнчи Украинăра кăна партине 331 çын кĕнĕ.

Йулашки хыпарсем

Италипе Германин Испанири интервенцийĕ

Англипе Франци пичечĕ—Испанири пăлхавçăсене пулăшма Италипе Германирен çарсем тата вăрçă хатĕрĕсем халĕ те йарса тăни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче Кадикса (Испанин кăнтăрти порчĕ) Германи салтакĕсем 5 пин çын çитнĕ. Çав портрах Италин 6 парахучĕ çинчен вăрçă хатĕрĕсем, вĕсен шутĕнче танксемпе пулеметсем те, нумай пушатнă.

Пасахесре (Бискай заливĕнчи порт) Германире туса кăларнă вĕрçĕнĕ тупăсене пурĕ 30 пушатнă, вĕсене Францире Испани хушшинчи чикĕ тăрăх лартса тухнă. Çурçĕр Испанине Германирен çар техникĕсем чылай çитнĕ.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Парти резервисемпе куллен ĕçлемеле

Куславкка комбиначĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 40 коммунис тата 18 сочувствующи. Комсомол организацинче 97 çын. Çак партире тăман актив. Ку активра вĕрентмеле, ĕçре пулăшмала. Епĕр вĕсене вĕрентме [illegible]натпăр та. Кашни коммуниса уйрăм кружоксем çумне çирĕплетнĕ. Коммуниссем парти историне вĕренеççĕ, ыттисем политграмăтă шкулне çÿреççĕ. Епĕ хам та парти историне вĕренекен кружока йĕртсе пыратăп. Кружокра пĕтĕмпе 18 çын. Халĕ пуртеç заңати ене йĕркелĕ çÿреççĕ. Литература çителĕклĕ.

Епĕр коммуниссене çеç мар, сочувствующисене те тĕрлĕ ĕçсем паратпăр. Пузанова сочувствующийĕ МОПР ĕçне йĕркелеме хушрăмăр. Вăл 3—4 кун хушшинче килхуçи хĕрарăмсене 50 çын МОПР членне кĕртнĕ. Белов сочувствующи пушара хирĕç кĕрешекен командăра Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне 250 тенкĕлĕх сарнă, Никитинă йулташ та çавăн пекех килхуçи арăмĕсем хушшинче Осоавиахимăн лотерей билетне 350 тенкĕлĕх сарнă. Сочувствующисенчен хăшпĕрисем агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ. Осип сочувствующи РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренекен кружока йĕртсе пырат. Заңатисене вăхатра, йĕркеле иртерет.

Парторганизаци чылай коммуниссене вĕрентсе çитĕнтернĕ. Коммуниссенчен хăшпĕриссене ответлă вырăнсене ĕçлеме лартнă. Гнусарăв парти членне столҗартан маçтăр лартнă, вăлах „Куславкка комбиначĕ“ хаçат редакторĕ пулса ĕçлет. Смирнов йулташа снабжени начаҗникĕнчен директăр заместителне лартнă. Павлăв коммуниса техникăла контроҗ пайĕн начаҗникне лартнă. Ку çынсем хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартаççĕ. Партире тăманнисене те çавăн пекех ответлă вырăнсене чылай лартнă. П. Илйин йулташ маçтăр пулса ĕçлет, Г. Новикăв йулташа та çавăн пекех рабочирен маçтăра лартнă. Е. Цыганова стахановкăна илсе пăхăр. Вăл ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ, республикăра паллă çын пулса тăчĕ. Вăл комбинатра малтан хура ĕçре ĕçлекен работницă пулнă. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн маçтăрт куçарнă. Халĕ ăна вăрман цехĕн начаҗникĕ тума палăртнă.

Парторганизаци çитĕнтернĕ коммуниссенчен хăшĕ-пĕрисем республикăра, районрт ĕçлеççĕ. Самахрап, Николайĕв Обком инструктăрĕ, Капустинă районри сывлăх пайĕн пуçлăхĕ. Пĕр 1938 çултах 7 çынна ответлă вăрăнсене ĕçлеме йант. Вĕсем халĕ урăх парторганизацисенче Пирĕн татах чылай çынсене вĕрентсе çитĕнтермеле. Чи малтан партире тăман активпа ĕçлессине вăйлатмала та, парти ретне татах ÿстермеле. Анчах ку ĕçпе епĕр мухтанма пултараймастпăр. Кăçал епĕр 2 çынна çеç партине илнĕ. Кандидатран парти членне 2 çынна куçарнă, тата 2 çынна сочувствующисен группине илнĕ. Комсомол çарĕ пысăк пулсан та, комсомолĕцсенчен пĕр çынна çеç партине илнĕ. Ку пите çителексĕр. Парторганизацинче парти кандидачĕсем 16 çын. Вĕсенчен хăшпĕрисем кандидатра 5—6 çул таран тăраççĕ. Николайĕв, Степанăвă, Йемелйанăв йулташсем 1932 çултанпа кандидатра тăраççĕ.

Меншĕн парторганизацинче ку таранчен партийе илес ĕç çителексĕр пынă? Меншĕн тесен парторганизаци тĕрĕс ĕçлемен. Уйрăм коммуниссем лайăх пĕлсе тăракан çынсенех рекомендаци памасăр тăна. Кунсăр пуçне тата партийе кĕрес текенсене нумай ыйтусем парса хуплантарнă. Кун пек çитменлехсем халĕ те пур. Акă, Васильев йулташ Новикăв коммунис патне рекомендаци ыйтма пырсан, Новикăв йулташ: „Есĕ парткомран рекомендаци çырмали формине илсе кил, вара парăп“, тенĕ. Кун пирки уйрăм калаçу тума тивре. Пирĕн парти резервисем чылай, вĕсемпе вирлĕн ĕçлени кирлĕ.

Партком çекретарĕ Серов.

Комсомолĕц-агитатăрсем ĕçре

ЙЕПРЕÇ. (Хамăр корр.). Районра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси анлăн сарăлса пырат. Райĕçтăвком суйлав участокĕсене тума хатĕрленет. Районĕпе илсен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 112 кружок организациленĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне агитатăрсем тата довереннăйсем пулса ĕçленĕ комсомолĕцсем кружоксене йертсе пыраççĕ. Пĕчĕк Упакассинчи „Путиловка“ колхозри комсомолĕц Н. Аракайĕв йулташ хăйсен йалĕнчи колхозниксене суйлав Положенине вĕрентме тытăннă.

— Епĕ ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ чухне те агитатăр пулса ĕçлерĕм. Халĕ каллех çак хисеплĕ ĕçе хам çине илтĕм. Вулав çуртне кашни кăçах халăх пухăнат. Епĕ вĕсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантарса паратăп,—тет Аракайĕв йулташ.

Чăрăшкасси йалсоветĕнче 8 кружок ĕçлеççĕ. Кружоксенче ик-виçшер заңати иртернĕ. Тата комсомолĕцсем килĕрен киле çÿресе, 7—8 çынăн пухса вĕрентме тытăннă. Асанăвă, Хурамал йалĕсенче тата Йепреç поçолкине кĕрекен Маркс йачĕпе тăракан колхозра, вечĕрсем умĕн суйлав Положенийĕсем çинчен ăнлантарса парат.

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлас ĕçе хатĕрленнĕ чухне комсомолĕцсем чылай ÿснĕ. Нумайĕшĕ хăйсен ĕçри пултарулăхĕсене лайăх кăтартса пана. Агитатăр пулса ĕçленĕ 19 комсомолĕц-колхозника йертсе пыракан ĕçсене куçарнă. Тури Клешкассинчи „Коминтерн“ колхозра рйадовой колхозник пулнă Ухтаков комсомолĕца колхоз председателне суйланă. Хирти Мăрат йалсовечĕн председателĕ пулнă Комиссарăва райĕçтăвкомĕн кадăрсен пайĕн инструктăрне куçарнă тата ыт. те. Халĕ те вĕсенчен нумайĕшĕ агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Комсомол райкомĕ 14 комсомолĕца 10 кунлăх курсра вĕрентсе кăларнă. Халĕ районра комсомолĕцсем 66 çын агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Т. Майорăв.

Вĕренĕве вăйлатмала

ВАРНАР. Мартăн 26-мĕшĕнче районри комсомол активĕн пухăвĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш Пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йаврĕ.

Пронире тухса калакансем комсомол организацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç, пулнă йăнăшсене, çитменлĕхсене тÿрлетме татăклă сĕнÿсем пачĕç. Комсомол организацинче хăшпĕр комсомолĕцсене ĕçе тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех комсомол ретĕнчен кăларса пăрахнă. Акă, зоотехникумри Зайцĕв комсомолĕца клас тăшманĕсемпе çыхăнса кайнă тесе комсомол ретĕнчен кăларнă. Лайăх тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Зайцĕв клас тăшманĕсемпе çыхăнни палăрман. Вăл хăй клас тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе пынă. Халĕ ăна ленинла комсомол ретне кайала илнĕ.

Çавăн пекех райĕçтăвкомри комсомол организацинче Васильев комсомолĕца çитĕплĕн тĕрĕслемесĕрех комсомол ретĕнчен кăларнă. Халĕ ăна та ленинла комсомол ретне кайала илнĕ.

Пуху ленинла комсомолăн йышне ÿстересси çинчен, политвĕренÿве чĕртсе йарасси çинчен хĕрÿлĕ сÿтсе-йаврĕ. Районра комсомол йышне ÿстерес ĕç начар пырат-ха. Хăшпĕр пуçламĕш организацисем ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Вăрманкас, Карачура, Йермошкă, Нурăс йалĕсенчи пуçламĕш организацисем 1938 çула кĕпĕренпе пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Çавăн пекех политкружоксем те начар ĕçлеççĕ. Районра 100 ытла пуçламĕш комсомол организацинче çурринчен ытларах çеç политкружоксем ĕçлеççĕ. Кумаш, Тÿлукас Мăрат йалĕсенчи пуçламĕш организацисенче политкружоксем организациленĕ, анчах вĕсем йĕркелĕ ĕçлесе пыраймаççĕ. Комсомол райкомĕ политвĕренĕве чĕртсе йарас тĕлĕшпе сахал ĕçлет. Комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем йертсе пыракан кружоксем примерлă ĕçлемеле. Анчах вĕсем уп пек ĕçлемеççĕ. Федăрăв йулташ Хапăсри комсомолĕцсене вĕрентет: Вăл кăçал ик-виç заңати туса иртернĕ те, халĕ унта çÿреме пăрахнă. Çавăн пекех Григорйĕва Кивйахакассинчи комсомолĕцсене вĕрентме çирĕплетнĕ. Вăл та кăçал виçтăват заңати çеç туса иртернĕ. Райком работникĕсенчен чылайĕшĕ нимĕнле кружокра та вĕренмеççĕ. Райком çекретарĕ Павлăв йулташ хăй нимĕнле кружокра та вĕренмест. Лайăх ĕçлекен комсомолĕцсене парти ретне куçарас тĕлĕшпе те ĕç йапăх тăрат. Кăçал пĕтĕмпе те 29 комсомолĕца çеç парти кандидатне кĕме рекомендаци панă.

Н. Козлов.

Комсомола кĕме пана ыйтусене вăхăтра пăхса тухмаççĕ

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн 4-мĕш пленумĕ хăйĕн решенинче кашни колхозра комсомол организацисем пулмала, тесе палăртса хăварнăччĕ. Ишлей районĕнче 43 колхозра комсомол организацисем çук. Комсомол райкомĕнче комсомола кĕме ыйтса çырнă зайавленисем 6-шер уйăх хушши пăхса тухмасăр выртарнисем те пулнă. Халҗхи вăхăтра 62 зайавленийе пăхса тухман. Комсомол райкомĕ çамрăксене комсомола илес çĕрте чылай йăнăшсем тунă. Комсомолăн программине, парти историне, географине начар пĕлекен çамрăксене комсомола илмесĕр тăнă.

Комсомол райкомĕ чылай комсомолĕцсене тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех комсомолтан, ĕçрен кăларнă. Пионер пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Д. Михайлăв йулташа унăн кукăшĕ колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ чух колхоз укçине салатнă пирки райком составĕнчен кăларнă, икĕ ернене йахăн ним ĕççĕр çÿретнĕ. Çавăн пекех В. Гуçкăв, В. Николайĕв, В. Никитин йулташсене те кукăшĕсем, мучĕшĕсем пирки бÿро членĕнчен кăларнă.

Районри комсомол организаци йăнăшсене тÿрлетес тĕлĕшпе халĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Чылай комсомол организацисенче комсомолĕцсем агитацие пропагандă тата куҗтурăла-массăлă ĕçе сарса пырас чухне, хăйсем ĕлĕкхи йăласене туса пыраççĕ. Шетмĕпуçĕнчи туллимăр вăтам шкулта вĕрентекен учитĕл Краснов комсомолĕц кĕçĕн кĕру пулса туйсенче сиксе çÿренĕ. Вăл ку вăхăта çитсе 4—5 хут авланма ĕлкĕрнĕ. Çакăн пек ирсĕр ĕç тăвакан комсомолĕцсем пирки комсомол райкомĕ çителĕклĕ мерăсем йышăнмаст.

Районри комсомол активĕн пухăвĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн 5-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене кашни пуçламĕш организацисенче тĕплĕн сÿтсе-йавма, тунă йăнăшсемпе çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушса хăварчĕ.

Гер. Щербаков.

Череповĕц районĕнчи (Вологда облăçĕ) библиотекăра.
Ÿкерчĕк çинче: „Веретье“ колхозри активлă вулавçă Г. Д. Голованăвă хăйĕн колхозникĕсене ваҗҗи кĕнекесем суйласа илет. Полкă патĕнче—Гуслистăвă библиотекăр.
Йефимовский фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Суйлав Положенийĕсем çинчен ăнлантарасси—пысăк ĕç

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тапхăр çывхарса килет. Çавăнпа та колхозниксемпе йединоличниксене Конституци çинчен, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантарса парасси—чи пысăк ĕç пулса тăрат. Апла пулсан, вулав çурчĕсен хăйсен тавра колхозниксемпе йединоличниксен анлă массине ытларах йавăçтармала, вĕсене Конституци тата суйлав саккунĕсем çинчен ăнлантарса парассипе вирлĕн ĕçлемеле.

Çак ответлă та хисеплĕ ĕçе районсенчи чылай вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем ăнланса илсе, тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Тури Панклири (Елĕк р-нĕ) вулав çурчĕн пуçлăхĕ Оçипăв йулташ колхозниксемпе йединоличниксене Сталинла Конституцине, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентме хĕрÿлĕн тытăннă. Оçипăв йулташ Конституцин кашни статйинех тĕплĕн каласа ăнлантарат, вулав çуртне пынă массăна хаçатсем çинче Испанири ĕçхалăхĕ ирĕклĕ пурнăçшăн фашиçăма хирĕç паттăрăн çапăçни çинчен, Китайри вăрçă çинчен çырнине вуласа парат, унăнпа радио итлессипе организацилет.

Шетмĕпуç йалсовечĕн (Ишлей р-нĕ) вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса Йевдокимăв йулташ ĕçлеме тытăннăранпа вулав çуртĕнчи ĕçсем чылайах аванланнине курма пулат. Колхозниксемпе йединоличниксем пушă вăхăтсенче вулав çуртне пухăнса тĕрлĕрен хаçат-журналсем вулаççĕ.

Йалсовечĕпе РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 4 кружок организациленĕ. Уйрăмăнах Йевдокимăв йулташ йертсе пыракан кружок аван ĕçлет. Вăл парти райкомĕ çумĕнчи агитатăрсене хатĕрлекен курсра вĕреннĕ. Пур кружоксенче те заңатисем йĕркелĕ иртеççĕ, колхозниксем суйлав Положенисене пысăк хастарлăхпа вĕренеççĕ, ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ.

Елĕк районĕнчи Мăн Вылăри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Табов йулташ та лайăх ĕçлет. Табов йулташ хăйĕн ĕçĕ çинчен кашни кварталтах колхозниксемпе йединоличниксен пĕрлешÿлĕ пухăвĕнче отчотсем туса парат. Вăл активпа таччăн çыхăнса ĕçлет. Çавăнпа та кунти вулав çуртĕнче куҗтмассăлă ĕç аван тăрат. Час-часах вулав çуртĕнче тĕрлĕрен ыйтусемпе докладсем, лекцисем, калаçусем туса иртереççĕ. Кĕркунперенпе тĕнчери лару-тăрусем çинчен 15 лекци, тĕнчерĕмĕ çинчен—23, йалхуçалăх ыйтăвĕсемпе—14, илемлĕ литературăсене мĕнле вуласси çинчен 2 хут лекцисем туса иртернĕ. Вулав çуртне пухăнса радио тăрăх паракан йулашки хыпарсене итлеççĕ. Кунта Сталинла Конституципе суйлав Положенисене вĕренес ĕçе тимлĕн тытăннă. Кружоксем ĕçлеççĕ, агитатăрсем 221 çынна килсем тăрăх çÿресе вĕрентеççĕ. Вулав çурчĕн библиотекинчен кĕнекесем илсе вулакансен йышĕ те ÿсех пырат. Иртнĕ çулта 498 колхозник 5360 кĕнеке илсе вуланă пулсан, кăçал 3 уйăх хушшинчех 658 колхозник 2350 кĕнеке илсе вуланă. Колхозниксемпе йединоличниксем пушă вăхăтсене усăлă иртереççĕ: кино, спектакҗ кураççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче драмкружок ĕçлет. Драмкружок членĕсем кĕркунперенпе 25 хут спектакҗ лартса панă.

Кун пек ĕçлекен вулав çурчĕсем сахал мар. Вĕсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вулав çурчĕ йалти куҗтурлă, агитацилĕ ĕçсен вучахĕ пулса тăмала. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене боҗшевикла хатĕрленнипе кĕтсе илмеле.

Суйлав Положенисене вĕренеççĕ

ВĂРНАР. ПСК(б) Парти райкомĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене кашни ĕççыннине тĕплĕн вĕрентес тĕлĕшпе агитатăрсене икĕ хут пухса икшер ернелĕх курссем туса иртерчĕ. Перремĕш хут организациленĕ курсран 23 агитатăр, иккĕмĕш хут организациленĕ курсран 30 агитатăр вĕренсе тухрĕç.

Халҗхи вăхăтра курсран вĕренсе тухнă агитатăрсем суйлав Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Карачура йалĕнчи Йевдокимăв йулташпа Çĕнйал Йаваш колхозри А. Поҗаков йулташ курсран вĕренсе килнĕ хыççăн, йалсоветри колхозсенчи кашни бригадăрах суйлав Положенисене вĕренмели кружоксем организацилерĕç. Кружоксем халĕ хĕрÿлĕн ĕçлеççĕ. Колхозниксем заңатисене пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ.

Сăнарпуç йалсоветне кĕрекен колхозсенче те суйлав Положенисене вĕренес ĕçе лайăх организациленĕ. Кунта агитатăрсем пулса туллимăр вăтам шкулта вĕрентекенсем ĕçлеççĕ.

Йамбахтинăри вулав çурчĕ çумĕнче, суйлав Положенисене вĕренмели кружокра, комсомолĕцсемпе колхоз активĕ 40 çын вĕренеççĕ. Вĕсем кружокран вĕренсе тухнă хыççăн, Сталинла Конституципе суйлав Положенисене колхозниксемпе йединоличниксене вĕрентме пуçлаççĕ.

Н. Козлов.

Вĕрентме тытăнман

Шĕнер йалсоветне (Çĕрпÿ районĕ) кĕрекен „Глиссер“, „Балтиец“, „Красный этновец“ колхозсенче хутла пĕлменнисем чылай, анчах вĕсене вĕрентме пайан кунчен те тытăнман-ха.

„Глиссер“ колхозра колхоз активĕн заочнă вĕренмели курсне йĕркеленĕччĕ, вăл курс та Федотăв агроном ĕçлеменнипе ĕçлеме пăрахрĕ.

Н. Жукăв.

Йанзакасси йалсоветĕнче (Çĕрпÿ р-нĕ) хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 150 çын. Вĕсене вĕрентме тытăнман-ха. Хутла пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе йалсовет çумĕнчи куҗтсекци ĕçлемест.

Арт. Алекçейĕв.

Çекцисем ĕçлемеççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Есмĕл йалсовечĕ çак кунсенче хăйĕн суйлавçисем умĕнче отчот турĕ. Суйлавçăсем хăйсем парса хăварнă наказа йалсовечĕ начар пурнăçланине палăртрĕç.

Йалсоветăн 12 секци пур. Анчах вĕсем хут çинче кăна. Выҗăх-чĕрлĕх çекцийĕ (руководителĕ В. Йегорăв йулташ) хăйĕн ĕçĕ çине йаланах çиелтен пăхат. Колхозсенче выҗăхсене ăратлатас тата вĕсен йышне ÿстерес тĕлĕшпе çекци ĕçлемест. Ăратлă вăкăр йалсовечĕпе те пĕрре кăна. Çавăн пекех выҗăх-чĕрлĕх шутне чакаракансемпе те кĕрешни çук.

Йалсенче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 68 çын. Апла пулин те куҗтсекци вĕсене вĕрентме тытăнтарман-ха. Трахомпа кĕрешес ĕç пачах сÿнсе ларнă. Кивĕ Тукайра çулталăк ытла ĕнтĕ трахом работникĕ çук. Пурне те çичĕ çул таран хутла вĕрентесси пурнăçланса пымаст. Шкул çулне çитнисем 13 ача шкул тулашне тăрса йулнă.

Финанс çекцийĕ те, ытти çекцисем пекех, сÿрĕккĕн ĕçлет.

Кивĕ Пукашри „Хурçă“ колхозра (председателĕ Васильев йулташ) „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели займ“ укçине 1550 тенкĕ пухмала пулсан, 212 тенкĕ çеç пухнă. Вăл ĕнтĕ займ илмесĕрăннисене ăнлантарса паманран килет.

Йалсовет работникĕсем ĕççыннисен жалăбисем çине бÿрократла пăхаççĕ. 1937 çулта йалсовет председателĕ Казаков йулташ 68 жалăба çине пурне те „отказать“ тесе çырса хунă. Çекцисен ĕçне халех вăйлатмала.

Вл. Сидйаков.

Шупашкар хулин кăçалхи бÿджечĕ

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пирĕн çĕршывра социалисăмла пурнăç çĕнтерчĕ. Социалисăм строителствинче тунă çитĕнÿсемпе пĕрлех Совет Союзĕнче финанс, укçа-тенкĕ çирĕпленсе пычĕ.

Фашисла çĕршывсен шпионĕсем, тискер агенчĕсем—„сылтăмла-троцкисла блокăн“ ирсĕр бандинчи сĕлен-калтасем пирĕн çĕршывра сиенлесе, сăтăрла ĕçсем туса пынă, анчах вĕсем хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртеймен. ССР Союзĕн финанспа бÿджечĕ социалисăм строителствинче паллă вырăн йышăнса тăрса, хытă аталанса, çирĕпленсе пычĕç, социалисăмла пурнăç тума, Сталинла Конституцине пурнăçа кĕртсе пыма нумай пулăшрĕç.

Государствă бÿджечĕпе вырăнти бÿджетсем пĕтĕм халăх хуçалăхĕпе пĕрле вăйланса пычĕç. Çав вăхăтрах вĕсем хăйсем халăх хуçалăхне, куҗтурăпа ĕççыннисен пурнăç условийĕсене ÿстерме, лайăхлатма нумай йулăшрĕç.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕнче Молотăв йулташ çапла каланă:

„Пирĕн государствăн республикă бÿджечĕ тата вырăнти бÿджетсем çакăн пек хăвăрт ÿсни пулман пулсан, государствă банкĕн кредит оборочĕсем хăвăрт ÿсни пулман пулсан, вара пирĕн хуçалăх, пирĕн куҗтурă строителстви çавăн пек пысăк хăвăртлăхпа ÿсмен пулнă пулĕччĕ, вара çĕршыв оборони те йулашки пĕтĕм çулсенче пулнă пек хăвăрт çирĕпленсе пырайман пулнă пулĕччĕ“.

Пирĕн çĕршывра социалисăмла строителствăна малала туса пынă çĕрте финанспа бÿджетăн вырăнĕ пит те анлăн, хăвăрт ÿсе пырат. Вăл кирек мĕнле республикăн, районăн, хулан бÿджетĕнче те аван курăнат.

Чăваш республикин столицин — Шупашкар хулин бÿджечĕ сталинла пилĕкçуллăхсен çулĕсенче чылайах ÿсрĕ. Пĕрремĕш пилĕкçуллăх вĕçĕнче—1932 çулта 1536 пин тенкĕ шутланă пулсан, 2-мĕш пилĕкçуллăхăн йулашки çулĕнче 4602 пин тенкĕ шутланнă. Урăхла каласан—Шупашкар хулин бÿджечĕ иккĕмĕш пилĕкçуллăхра виçĕ хут ÿснĕ.

Промышленнăç, аласта кооперацийĕ ÿснĕ май, сÿту-илÿ вăйланнă çемĕн, хулара пурăнакан çынсен пурнăçĕ лайăхланса пынипе хула бÿджечĕ кирлĕ тăкаксене йÿнеçтерекен бÿджет çеç мар, вăл тухăçлă бÿджет пулса тăчĕ. Халĕ пирĕн тупăшсем тăкаксене ытлашшипех витсе пыма пуçларĕç. Хула бÿджечĕ республикă бÿджетне те нумай пулăшу парат. Хулари предприйатисенчен тупăш налогĕнчен тухакан укçа-тенкĕ хисепĕнчен çуррине ытла республикă бÿджетне куçаратпăр.

Предприйатисенчен пухăнакан государствă налог хисепĕ çулсеренех ÿсе пырат: 1932 çулта—933 пин тенкĕ пухăннă пулсан, 1937 çулта—2414 пин тенкĕ пухăннă. Пĕрлештернĕ çектăртан илекен тупăш налогĕ те çулленех çул ытларах пухăнат. 1932 çулта 252 пин тенкĕ, 1937 çулта — 1459 пин тенкĕ пухнă. Коммунаҗнăй предприйатисенчен тухакан налога 1932 çулта 41 пин тенкĕ, 1937 çулта—312 пин тенкĕ пухнă. Ытти тупăшсем тăрăх та ÿсĕм çакăн пекех. Çак цифăрсем пирĕн халăх хуçалăхĕ ÿснине, предприйатисем вăйланса пынине кăтартаççĕ.

Государствăн массăлă займĕсем ăнăçлăн сараласçĕ. 1932 çулта займ 975 пин тенкĕлĕх, 1937 ç.—1879 пин тенкĕлĕх сарнă. Займ сарнипе пухăнакан укçаран хула бÿджетне 10 процент йулат. Государствă займĕсене çулленех ытларах та ытларах çырăнса илни—хулари ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине кăтартат.

1938 çулта хула бÿджетĕнче, çуртйĕрсем тума хывакан укçа-тенкĕне шутламасан, 5 мĕлйун тенкĕ шутланат. Çурт-йĕрсем тума хывакан укçа-тенкĕне шута илсен, хула бÿджетĕнче кăçал 8 мĕлйун тенкĕ пулат.

Шупашкар хулин историйĕнче пурăнмали çуртсем тунă çĕре тата социаллă-куҗтурă строителствине çавăн чухлĕ нумай укçа-тенкĕ хывни халиччен пулман. Шупашкар хулин кăçалхи бÿджетĕнчен укçа-тенкĕ мĕнле тăкаксем çине кайат-ха?

Сталинла Конституци вĕренÿ прави парат. Халăха вĕрентес ĕç çине укçа-тенкĕ нумай кайат. 1932 çулта 393 пин тенкĕ кайнă пулсан, 1937 çулта 1979 пин тенкĕ кайнă, 5 хут ÿснĕ. 1938 çулта ку тĕлĕшпе куллен пулса тăракан тăкаксем ваҗҗи 1653 пин тенкĕ уйăрнă. Кунсăр пуçне 880 ача вĕренмелĕх пысăк шкул тума—760 пин тенкĕ палăртса хунă.

1932 çулта хулара 1789 çын вĕреннĕ пулсан, 1937—38 çулсенче 4000 çын вĕренет. 1932 çулта ачасен сачĕ 3 пулнă, вĕсенче 150 ача шутланнă. 1937 çулта 7 ача сачĕ, вĕсенче 600 ача. 1937 çулта Пионерсен çуртне ĕçлеттерме 150 пин тенкĕ тăкакланă.

Ĕççыннисен сывлăхне сыхласси—партипе правителствăн тĕп задачисенчен пĕри. Вăл Сталинла Конституцинчен тухса тăрат. 1932 çулта вăл ĕç тăрăх 20 пин тенкĕ тăкак тунă пулсан, 1937 çулта—464 пин тенкĕ тăкак тунă. 1938 çулта 606 пин тенкĕ тăкак тума палăртнă. Çак иртнĕ çулсенче çĕнĕрен ачасен йаслисем тунă. Ачасен тата хĕрарăмсен консуҗтацийĕ, шкулта вĕренекенсен амбулаторийĕ, хула айккисенче тата предприйатисенче медицинă пункчĕсем, васкавлă пулăшу ĕçлет. Сĕт кухҗи тунă, ача çуратмали çурт татах çĕнĕрен тăваççĕ, т. ыт. те. Çаксем вĕсем пурте ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатма, сывă тĕреклĕ ача-пăча çитĕнтерме, ĕççыннисен сывлăхне упрама кирлĕ.

Социаллă пулăшу парас йенĕпе 1932 çулта 20,5 пин тенкĕ, 1937 çулта 82 пин тенкĕ тăкакланă, 4 хут ÿснĕ. 1937 çулта нумай ача-пăчалă хĕрарăмсем 7 çын 14 пин тенкĕ пулăшу илнĕ. Социаллă пулăшу йенĕпе Сталинла Конституци тăрăх панă правасене пурнăçа кĕртме хула бÿджечĕ çакăн пек пулăшат.

Çурт-йĕрсемпе коммуналлă строителствă ĕçне вăйлатни, хулана ырăлатни—ĕççыннисен йăлапа пурнăç условийĕсене лайăхлатни пулат. Çак тĕлĕшпе иртнĕ çулсенче чылайах пысăк тăкаксем тунă. 1932 çулта—486 пин тенкĕлĕх, 1937 çулта—1358 пин тенкĕ ытларах тăкак тунă. 1938 çулта коммуналлă хуçалăха йама 2124 пин тенкĕ уйăрнă. Урамсене асфаҗт сарма 700 пин тенкĕ, чул сарма 175 пин тенкĕ, урамсене çутатма 55 пин тенкĕ, кĕперсем тума 100 пин тенкĕ, тротуарсем тума 76 пин тенкĕ, йăвăçсем лартма 28 пин тенкĕ бÿджетра палăртса хунă. Халĕ 24 хваттерлĕ пурăнмали çурт тума, çĕнĕрен иккĕмĕш гостиницă тума тытăннă. Çавăн пекех тата халĕ шыв пăрăхĕсене сарма пуçăннă, електростанцине туса çитереççĕ, електрицăпа çутатасси нумай сарăлмала. Çак ĕçсене тума мĕлйуншар тенкĕ тăкакламала пулат. Çак тăкак та Сталинла Конституцинчен тухса тăрат. Çакăн пек тăкаксем туни—вăл чăваш ĕçхалăхĕшĕн, çынсемшĕн тăрăшни пулат. Чăваш республикин центрне илемлетни, ырăлатни—хаклă, чаплă çуртсем, гостиницăсем, шкулсем, йаслĕсемпе пуҗницăсем туса, урамсене чул сарса, асфаҗт сарса илемлетни—чăваш халăхĕшĕн савăнăç.

1938 çулхи бÿджетра палăртнă укçа-тенкĕпе тивĕçлĕн, пахан усă курасси—хула совечĕн, унăн пайĕсен тата строителствă организацийĕсен тĕп задачи пулат.

Хула ваҗҗи панă укçа-тенкĕпе усă курма ытах та йапăх хатĕрленеççĕ-ха. Çуртйĕрсем туса техникла плансем, пройектсем, сметăсем тăвасси, банкпа тата çуртйĕрсем тăвакан организацисемпе догăвăрсем тăвасси вăраха кайса пырат. Строителствă материалĕсене те йапăх хатĕрлеççĕ. Хăйăрсăр пуçне хатĕрлесе хуни урăх нимĕн те çук. Кирпĕч тата йăвăç таврашсене илсе, строителствă пымали вырăна турттарса хуман. Ĕç çакăн пек вăраххăн пыни строителствă ваҗҗи уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курассине хăрушлăха тăратма пултарат.

Пĕрремĕш квартăл иртрĕ те ĕнтĕ. Çавăнпа та строителствă ĕçне тытăнма çак кунсенчех хатĕрленсе çитес пулат. Строителствă ĕçне тăвакан руководителсен, инженерсемпе техниксен çак ответлă задачăна пурнăçа кĕртме боҗшевикла тытăнмала—строителствă ваҗҗи уйăрнă мĕлйуншар шутланакан укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех тата тивĕçлипе усă курмала.

Ку тĕлĕшпе бÿджет умĕнче те пысăк задачă тăрат. Бÿджетăн, тупăш йенĕпе пухăнмали укçа-тенкĕне вăхăтра пухса пымала, мĕнле тăкаксем тунине çирĕп тĕрĕслесе пымала. Хула совечĕ çумĕнчи финанс пайĕн, пĕтĕм финанс активĕпе пĕрле, финанс планне пур йенĕпе те вăхăтра тултарса пымала—çакă унăн чи пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ.

И. Золотникков.

Çулйĕрсене çурхи шывран сыхлама

Кăçалхи çул шыв нумай пуласси шута илсе çулйĕрсене, кĕперсене сыхлас тĕлĕшпе районти çулйĕр пайĕ татăклă ĕçсем тума тытăнчĕ. Кĕперсене шыв илесрен сыхлама кашни кĕпер çумне уйрăм хуралçăсем çирĕплетнĕ, кĕпер таврашĕнче шыв йухма çул уçса хурас ĕç халĕ пысăк хăвăртлăхсемпе пырат. Акă Елĕкрен Шупашкара кайакан çул çинчи Чăваш Сурăмпа Тимĕрçкасси кĕперĕсене пăртан сыхлама бригадă организациленĕ. Вăл бригадăра 9 çын, тата 2 плотник тăрат. Вĕсен 70 метр тăршшĕ канат, 4 хунар, 4 тимĕр кĕреçе, 4 йăвăç кĕреçе, 5 лум, 4 пуртă, 6 накур тата икĕ лаша пур.

Ваç Йефремăв.

Н

Вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ сарăлса пырать

Елĕк районĕ 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсене анаçлăн ирттерсе вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Трак районĕпе ăмăртса ĕçлет. Ăмăртури тĕп задачă—гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кайа мар тĕштырă, кантăр сӳсĕ 5 центнĕртан кайа мар, çĕрулми 130 центнĕртан кайа мар туса илесси.

Çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе Елĕк районĕнчи чылай колхозсенче кĕрешӳ анлăн сарăлса пырать. Колхозсем, бригадăсем, звенósем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Район акмалли вăрлăха трийĕрпа суртлас плана тултарнă.

Çĕре çемçетмелисем хатĕрлес плана та чылай йенчен пурнăçланă темелле. Акă, йӳшкăн хатĕрлемелли плана—184 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемелли плана — 204 процент, фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килмелли плана—94 процент таран тултарнă. Анчах çĕре çемçетмелли ытти йапаласене хатĕрлесси начар тарах пулса пырать: хĕллехи вăхăтра тислĕк хатĕрлесе уйа кăлармалли плана 83 процент, торф кăларса турттармалли плана 40 процент кăна пурнăçланă.

Чылай колхозсем çуракине хатĕрленес ĕç тата вăйлă тырпулшăн кĕрешесси мĕнле пулса пынине пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслӳсем ирттерни колхозсенчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать.

Мартăн 24-мĕшĕнче Лăкăш йалсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленес ĕç тата вăйлă тырпулшăн кĕрешесси мĕнле пынине тĕрĕслесе тухрĕç.

Тĕрĕслӳре „Радио“, „Большевик“ колхозсем çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитни палăрчĕ, вĕсем çĕре çемçетмелли йапаласем чылай хатĕрлесе хунă.

Çав вăхăтрах „Хĕрлĕ партизан“ тата „Звезда“ колхозсенче ĕç çителĕксĕр пырать. „Хĕрлĕ партизан“ колхозра ку вăхăта çитсе те вăрлăхсене çителĕклĕ суртламан, çĕре çемçетмелли йапаласене хатĕрлес тесе ĕçлемеççĕ, йалхуçалăх машинисем йусавлă мар. Колхоз председателĕ Иероскин йулташ çуракине хатĕрленес ĕçе йертсе пымасть.

„Звезда“ колхозăн клевĕр вăррипе çĕрулми вăрлăхĕ çитмест. Çавнашкалах ут хатĕрĕсем те йусавлă мар.

Хирлеп колхозĕ вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Хитĕкушкĕн колхозĕпе ăмăртса ĕçлет. Хирлеп колхозĕ ăмăртура мала тухас тесе çине тăрса кĕрешет. Кунта бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ăмăртура Сурикăв йулташ бригади малта пырать. Ку бригадă вăйлă тырпул туса илме чылай пысăк ĕçсем тунă.

— Епĕр кăçал гектартан вăтам шутпа 150 пăт, уйрăм участкă çинчен 200 пăт тĕштырă туса илме задачă лартрăмăр. Ăмăртса ĕçлесе ăна пурнăçлатпăрах,—тет бригадир Сурикăв йулташ.

Ф. Филиппăв.

Хут çинче çеç ăмăртакан колхозсем

Çак кунсенче Йелчĕк районĕнчи ăмăртса ĕçлекен „Смычка“ тата „Коммунист“ колхозсем ăмăрту догăварĕсене пурнăçланине тĕрĕслесе тухрĕç.

Тĕрĕслӳре колхозри активисем тата йалсовет членĕсем хутшăнса ĕçлерĕç, вĕсем нумай çитменлĕхсене палăртрĕç.

Вăрлăхсем пĕр колхозĕн те хатĕр мар. „Коммунист“ колхозăн йасмăк, клевĕр вăрлăхĕсем çитмеççĕ. „Смычка“ колхозĕн клевĕр вăрлăхĕ пĕр пĕрчĕ те çук, пахча-çимĕç вăрлăхĕсене пĕртте хатĕрлемĕн.

Тулăпа сĕлĕ вăрлăхĕсĕр пуçне ытти вăрлăхсем акма йурăхлă мар. Вăрлăхсене çумкурăк вăррисемпе ванчăк тыр пĕрчисенчен тасатман. Районри вăрлăх лабораторийĕ вăрлăхсене тепĕр хут суртласа, анализ тума хушса хăварнă. Анчах тĕрĕслӳ пуличчен колхозсем вăрлăхсене тасатма тытăнман.

Тепĕр çитменлĕх—суртлă вăрлăх çителĕклĕ марри. „Смычка“ колхоз пăрçапа йасмăк вăрлăхĕсене халиччен те суртлă вăрлăхпа улăштарман. Унăн тата çилос валљи акма хĕвелçавăрнăш вăрлăхĕ çук.

Пĕрне-пĕри тĕрĕслеме пынă колхозниксем мĕн пур çитменлĕхсене пĕтерме, вăрлăхсене суртлассине те çак кунсенчех туса пĕтерме кăтартса хăварчĕç.

Тата çак колхозсенче лашасем çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман. „Коммунист“ колхозăн лашисем вăтам ӳтлĕ шутланаççĕ. „Смычка“ колхозăн лашисем питĕ начар, хăшĕсем кӳлме йурăхсăр. Начар лашасене ĕçрен хăтарса уйрăм апат çине тăратман.

Çуракине хатĕрленес ĕç кайа йулса пыни плансăр ĕçленĕрен те килнĕ. Пĕр колхозĕнче те производствăлă плансене колхозниксем хушшинче сӳтсе-йавса çирĕплетмен. Ĕç планĕсем тата агроплансем çук. Ĕç нормисене пăхса тухнă пулсан та, колхозниксем ăна пĕлмеççĕ, вĕсене пухура çирĕплетмен. Колхозниксем çуракине мĕнле ĕçре, хăш лашапа, мĕнле машинăпа ĕçлессине ку тараннччен те пĕлмеççĕ.

Бригадăсен хушшинче ăмăрту догăварĕсене туман. Култтурăлă-массăлă ĕçсем те начар, хаçатсем çук, стена хаçачĕсем кăлармаççĕ.

Кун пек çитменлĕхсем Йелчĕк районĕнче тата ытти колхозсенче те палăраççĕ.

Ф. Архипăв.

1938 çулхи çураки умĕн

Ăмăрту догăварĕсене тĕрĕслеççĕ

ВĂРНАР. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче тунă социалисăмла ăмăрту догăварĕсене тĕрĕслеме тытăнчĕç. Колхозсем пĕр-пĕрин ĕçне питĕ хытă тишкĕреççĕ.

Çак кунсенче Хăмăш йалсоветне кĕрекен „Çамрăк большевик“, „Броневик“ тата „Çĕнĕ çул“ колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслӳре „Çамрăк большевик“ колхоз çуракине лайăх хатĕрленни курăнчĕ. Ку колхозра акмалли вăрлăхсене пĕтĕмпех икшер хут клейтон, пĕр хут трийер тата тепĕр хут ала витĕр кăларса тасатнă. Йалхуçалăх машинисем йусавлă. Вĕсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе тухнă. Вăрлăх турттарма михĕсемпе шăналăксене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Колхоз вырăнти удобренисене те çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Конюхсем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах „Çĕнĕ çул“ колхоз çуракине хатĕрленессипе начар ĕçлесе пырать-ха. Халĕ те вăрлăхсене суртласа пĕтермен. Колхозăн сухан вăрлăхĕ çителĕклĕ пулнă, анчах та ăна лайăх пăхман пирки çĕртсе йанă. Çĕрулми вăрлăхĕ те çĕрме тытăннă. Йалхуçалăх машинисене хаљ тин йур айĕнчен кăлараççĕ. 3-мĕш бригадăра (бригадирĕ Г. Лоçĕв) плут пайĕсем хатĕр мар, вĕсен тĕлне пĕлекен те çук.

Сăкăт йалсоветне кĕрекен „Çĕнйал“, „Хĕрлĕ çăлтăр“ тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсем те тĕрĕслӳ туса ирттерчĕç. Ку йалсоветĕнче „Хĕрлĕ çăлтăр“, „Çĕнйал“ колхозсем çуракине лайăхрах хатĕрленнĕ. Анчах та Буденный йачĕпе тăракан колхоз çуракине начар хатĕрленни курăнчĕ. Колхозра 8 бригадăран пĕр бригадинче те сӳресемпе туртасем çитмеççĕ. Плугсене тата çейăлкăсене йусаман. Колхоз председателĕ Уткин йул. çуракине хатĕрленес ĕçе пĕтĕмпех бригадирсем çине шанса ларнă. Колхозниксем агротехникăна вĕренеспĕн, вĕсене никам та вĕрентекен çук.

Çавăн пекех Малтикас колхозĕпе Çĕнйал Нурăс колхозĕ. Кольцовкăпа Зеленăвкă колхозĕсем пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕслӳ туса ирттерчĕç.

Колхозсем тĕрĕслӳре пулнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме палăртса хăвараççĕ.

Н. Козлов.

Çулран çул ӳсет

Шупашкарти бакалей магазинĕ хула халăхне валљи куллен кирлĕ апат-çимĕçсене çултан çул ытларах кӳрсе килет.

Магазин таварçаврăнăшĕн планне 1936 çулта 101 процент, 1937 çулта 201 процент тултарнă. 1938 çулта çав хисеп татах та ӳсет.

Çитĕнӳсем пур. Анчах магазин ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Хаљхи вăхăтра магазинăн пулă, конçервă, шур çăнăх, çу çителĕклĕ таран çук. Вăл ĕнтĕ суту-илӳре пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене халĕ те пĕтерсе çитерменрен килет.

1937 çулта бакалей магазинĕ сахăр тата махоркă ытлашши йарса панă. Çав вăхăтрах ытти кирлĕ апат-çимĕçсене вăхăтра йамасăр тăнă. Конçервă тата ытти çимĕçсем кӳрсе килес тĕлĕшпе бакалей магазинĕ пайанхи кун та прорывра. 1938 çулхи I-мĕш кварталшăн Горький хулинчен 37.000 банкă конçервă кӳрсе килмеле пулнă. Анчах халĕ те кӳрсе килмен. Çавăн пекех ку магазин хаљ 85 процентлă шур çăнăхсăр ларать.

Тавар илекен сын магазинсенчен куллен кирлĕ апат-çимĕçсене вăхăтра тата çителĕклĕ таран ыйтать.

Арк. Нестĕрăв.

Хутла пĕлменнисене пурне те вĕрентмеле

1937 çулхи кĕркуннерепе кăçалхи февралĕн 20-мĕшне Турхан районĕнче хутла пĕлменнисен шкулĕсенчен 327 çын, сахал пĕлекенсен шкулĕсенчен 403 çын вĕренсе тухнă. Халĕ хутла пĕлменнисен шкулĕсенче 388 çын, сахал пĕлекенсен шкулĕсенче 665 çын вĕренеççĕ.

Çапах та çитĕннисене вĕрентес ĕç Турхан районĕнче çителĕклĕ пырать теме пултараймастпăр. Районра хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем тата 1352 çын шутланаççĕ. Тӳрех каламалла, çитĕннисене хутла вĕрентес ĕçпе районри организацисем (сутĕçпайĕ, райĕçтăвком, комсомол райкомĕ) çителĕклĕ ĕçлеймеççĕха, вăл ĕçре ĕçлекенсене пулăшмаççĕ.

Акă, Шăраут йалсоветĕнче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем пĕтĕмпе 95 çын. Вăл шутран мĕн пурĕ те 18 çынна çеç вĕрентме тытăннă, вĕсенчен те шкула 2—4 çын кăна çӳреççĕ. Çитĕннисене хутла вĕрентес ĕçпе йалсовет председателĕ Логинăв та, культсекцин руководителĕ Муллин та интересленмеççĕ.

Çитĕннисен шкулĕнчи Никифăрăв учителĕ хутла пĕлменнисене вĕрентессишĕн çав тери тăрăшать, анла пулин те унăн ĕçĕ малала каймасть. Мĕншĕн тесен, вăл ĕçе йалти актива мобилизацилемен. Шăраут йалсоветне кĕрекен Молотăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Широкин йулташа илер. Широкин йулташăн арăмĕ хутла пачах та пĕлмест. Çапах та вăл ăна çитĕннисен шкулне вĕренме йамасăр тăрать.

Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене шкула çӳретес тесен, вĕсем хушшинче хытă ĕçлемелле. Çитĕннисен шкулĕсене çӳреме пултарайман ачалă хĕрарăмсене вĕрентме уйрăм культармейцăсене çирĕплетмелле.

Смирнов.

Хапрăк руководствинче çĕнĕ çынсем ĕçлеме пуçласан

Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиççи хапрăкĕ, йертсе пырас ĕççене çĕнĕ çынсене лартнă май йулашки уйăхсенче уйрăмăнах лайăх ĕçлеме пуçларĕ.

Кунта хапрăк директăрĕ пулса цех начаљникĕ пулнă комсомолĕц Трофимăв йулташ, техникла директăр пулса Константинăв йулташ (вăл та комсомолĕц) ĕçлеççĕ. Иккĕшне те вĕсене ку ĕççене кăçалхи çулăн пуçламĕшĕнче çеç лартнă. Константинăв йулташ ку ĕçе куçаччен станочник, унтан пĕр уйăх хушши цех начаљникĕ пулса ĕçленĕ.

Хапрăк руководствине лартнă çĕнĕ çынсем ĕçре хăйсен пултарулăхне, хастарлăхне уççăнах кăтартрĕç. Вăл акă çакă тĕслĕхсенчен те аван курăнать: хапрăк йанвар уйăх планне 123,2 процент, февралте—144,6 процент тата март уйăх планне 20 кун хушшинчех 112 процент тултарнă. Çапла вара хапрăк 1-мĕш квартăл планне мартăн 20-мĕшне 126,5 процент ытла тултарнă.

Стахановĕцсен йышĕ çак йулашки виçĕ уйăх хушшинче чылай ӳсрĕ. Малтан нормăна тултарса ĕçлейменнисем техникăна вĕренсе пынă май стахановĕцсен ретне тăчĕç. Халĕ пĕтĕм хапрăкĕпе нормăна тултарайманнисен шучĕ 7 процента йахăн çеç шутланать. Вĕсем—вĕренекенсем тата нумай пулмасть хапрăка ĕçлеме кĕнисем. 5—6 уйăхран кайа мар станок патĕнче ĕçлекенсенчен нормăна тултарайманнисем пачах та çук. Тимофей Морозăв хапрăка ĕçлеме 1937 çулта килсе кĕнĕ. Малтанах çăмата йăвалас ĕçе нимĕн те пĕлмен. Ун чухне вĕренекен шучĕпе ăна уйăхне 60 тенкĕ кăна панă. Çак йулашки 4—5 уйăх хушшинче вăл çăмата йăвалас ĕçе пĕтĕмпех вĕренсе çитрĕ. Халĕ вăл кашни уйăхрах нормăна 150—160 процентшар тултарса 250—300 тенкĕ таран ĕçлесе илекен пулчĕ. Кăçал вăл комсомола кĕчĕ. Акă тата Иван Çпирин йулташа илер. Вăл хапрăкра 1936 çултанпа ĕçлет, комсомолĕц. Кунта килеччен çырма та, вулама та лайăх пĕлеймен. Комсомол комитечĕ пулăшнипе хут пĕменлĕхе пĕтерчĕ, халĕ вăл каçхине вĕренмелли вăтам шкулта, 5-мĕш класра вĕренет. Техникăна алла çавăрса илнĕ, пичке тăвас çĕрте ĕçлесе нормăна йаланах 250 процент таран тултарса ĕçлет. Çултаăк кайала уйăхри ĕçукçийĕ 300—400 тенкĕ шутланнă пулсан, йулашки вăхăтсенче 600—750 тенкĕ ĕçлесе илет. Обшчĕствăлă ĕçре те хастарлăн ĕçлет. Хăйсен цехĕнчи рабочисене йаланах хаçат-журналсем вуласа парать, калаçусем туса ирттерет. Ăна рабочисем йуратаççĕ, хисеплеççĕ. Çавăншăнах рабочисем Çпирин йулташа хапрăк комитет председателĕн заместителне суйларĕç.

Çакăн пек тĕслĕхсем татах та пур. Вĕсем пурте хапрăк руководствине лартнă çĕнĕ çынсен лайăх ĕçĕсем çине кăтартса пăраççĕ. Çĕнĕ руководителсем ĕçе чăн малтанах цехсенчи, сменăсенчи ĕçе йĕркеленинчен пуçарса йанă. Хастарлă, ĕçлеме пултаракан çынсене суйласа илсе уйрăм участкăри ĕçсене йертсе пыма лартнă. Кайран çавсемпе ĕçлеме пуçланă.

Иван Федоçейĕв хапрăк ĕçлеме пуçланă çултанпах çăматă йăваланă цехра ĕçлет. Вăл ĕç нормине 200 процентран кайа мар тултарса ĕçлесе пынă. Кăçал ăна мастăра куçарчĕç. Халĕ унăн сменни йаланах ыттисенчен малта пырать, йанвар уйăх планне 141 процент, февралте 175,7 процент, март уйăхĕнче тата ытларах тултарчĕ. Çакăн пекех нумай пулмасть хăма çуракан цех начаљникĕн заместителĕ пулса ĕçлеме рабочи-стахановĕца Лукин йулташа, çав цехăн начаљникĕ пулма бондăр пулса ĕçленĕ Волкăв стахановĕца лартнă. Ĕçре пурте вĕсем паха тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ.

Çĕнĕ çынсем йăварлăхран хăрамаççĕ, вĕсем мĕн пур ĕçе пĕр-пĕринпе килĕштерсе, сӳтсе-йавса туса пыраççĕ. Рабочисем хушшинчи ĕç дисциплинине, ĕç вырăнĕсене йĕркеленĕ. Кашни çын хăйĕн участкинчи ĕçĕшĕн çирĕп ответ тытать. Производствăна йертсе пыракансем чăн-чăн командирсем пулса тăраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Çитменлĕхсенчен уйрăмăнах профсойуз организацийĕн начар ĕçне палăртмала Профсойуз организацийĕ ăмăрту ĕçне йĕркелемен, çырнă догăварсене те тĕрĕслемен. Çавăн пекех изобретателствăпа рационализаци ыйтăвĕпе те профсойуз нимех те туман. Рабочисем панă сĕнӳсене чылай вăхăт хушши пăхса тухмасăр выртараççĕ. Акă Верхилейĕв йулташ йулашки 2—3 çул хушшинче 6—7 сĕнӳ панă пулнă, анчах унăн сĕнĕвĕсене халĕ çеç пăхса тухаççĕ. Иртнĕ çулсенче техникăна вĕренес ĕç те çителĕклĕ пулман. Халĕ ку тĕлĕшпе икĕ кружок ĕçлет, çак кунсенче тата тепĕр кружок ĕçлеме пуçлать.

Кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерсен хапрăк татах та лайăхрах ĕçлеме пуçлассишĕн куç умĕнчех.

Хар. Лисин.

„Красный Октябрь“ колхоз (Кирăв облаçĕ, Вожгаљски район)—колхоз миллионер пулса тăчĕ. 1937 çулта колхоз 420.260 тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Колхоз—Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулмалли кандидат. Хуçалăхла-културăлă строителствă валљи вăл 200 пин тенкĕ тăкакланă. Кану çурчĕ, столовăй тата мунча пур. 1937 çулта колхоз 62 пин тенкĕлĕх промтаварсем кӳрсе килнĕ. Нумай колхозниксен велосипед, патефон, çĕвĕ çĕлемелли машинă, музыкă инструменчĕсем пур. Çулталăк хушшинче колхозниксем 57 кинофиљм, 58 спектакăљсемпе концертсем курнă. 126 колхозник ачисем вăтам шкулра, 12—техникумра, 8—аслă шкулсенче вĕренеççĕ. 70 колхозник совет влаçĕ вăхăтĕнче специаљнăç илнĕ.

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран, çӳлтен): 1) колхозри çвинаркăсем вĕренӳре; 2) колхозри вăтам шкулти физика урокĕнче; сылтăмра: колхоз пекарнинче.

Фридљандпа Маркăв фото-ӳкерчĕкĕсем (Сойузфото).

Екрансем çине мĕнле çĕнĕ фиљмсем тухаççĕ

Орденлă киностуди „Ленфиљм“ сывăх вăхăтсенче чылай çĕнĕ фиљмсем кăларать.

„Друзья“. Иртнĕ çул çăвĕпех Кабардино-Балкар тăвĕсемпе ту çурăкĕсенче, Ингушети йалĕсенче, Орджоникидзе хули çывăхĕнче „Друзья“ йатлă фиљм валљи натурăлă сценăсене ӳкерсе çӳренĕ. Картинăн тепĕр пайне кĕркунне тата хĕлле „Ленфиљм“ киностудинче ӳкернĕ.

Халљхи вăхăтра „Друзья“ йатлă фиљм пулса çитнĕпе пĕрех. Унăн теми—ССР Сойузĕнчи халăхсен туслăхĕ, вĕсем пĕр шухăшлă пулни. Кавказра патша опричникĕсем хĕтĕртсе, чĕртсе пынă мĕн аваллтанхи нацилĕ хирĕçӳлĕхсене большевиксем мĕнле сĕнтерсе пыни, тĕрлĕ ăрусен чухăнĕсем Советлă Кавказшăн кĕрешни. Фиљмри ĕçсем 1914—1918 çулсенче пулса иртеççĕ. Фиљм геройĕсем — большевик Алексей (РСФСР халăх артисĕ Б. Бабочкин), тимĕрçĕ Умар (Руставели йачĕпе тăракан театăр артисĕ Коте Даушвили), осетин Бета (РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ артисĕ Н. Черкасов), ингуш Мусса (С. Койуков артис).

Л. Арнштам режиççорăн халљ фиљмăнчи ответлă сценине—Ленин, Сталин тата фиљм геройĕ Алексей 1918 çулта Смољнăйра, Петроградра тĕл пулнине ӳкерсе илесси йулнă. Вăл сценăна Мускаври „Мосфиљм“ киностудинче ӳкереççĕ. Ленин рољне ССР Сойузĕн халăх артисĕ Б. Шчукин выљать.

Тепĕр уйăха йахăн вăхăтран **„Накануне“** йатлă фиљма (Фр. Вољфăн „Доктор Мамлок“ йатлă пйеси тăрăх) туса пĕтереççĕ.

Ку фиљм Германире фашисла переворот хыççăн пирвайхи кунсенче пулса иртнĕ ĕççене çутатса парать. Профессăр Мамлок йеврей, буржуалă демократ. Демократи принципĕсене ним йулмиччен çĕмĕрекен, Мамлокран унăн ĕçне туртса илекен, унтан мăшкăлакан, уншăн мĕн хакличчен йăлтах мăшкăлакан фашисла варвăрсем,—вăтă професcăрăн шухăшри картинисене пĕтĕмпех пĕтереççĕ. Старик хăй ывăлĕн—коммунисăн чăнлăхне ăнланса илет, кайран вилет. Демократин чи лайăх çыннисем Германири коммунисла партипе рабочи класăн геройла кĕрешĕвĕн ретне тăраççĕ. Халăх фрончĕн никĕсĕ хывăнать.

Фиљма А. Минкин тата Г. Рапопорт режиççорсем лартаççĕ.

„Амангельды“. Ку фиљм Казахстанăн легендарлă халăх геройĕ çинчен—Амангељды çинчен каласа парать. Фиљма режиççор М. Левин ӳкерет. Амангељды—историре пулнă çын. Империалисăмлă вăрçă вăхăтĕнче вăл патшана хирĕç казахсен восстанине сĕкленĕ. Октябĕр хыççăн Амангељды большевиксен ретне тăнă тата парти йертсе пынипе партизан отрйачĕсен пуçне тăрса Советлă Казахстаншăн кĕрешнĕ.

„Амангельды“ йатлă фиљмра тĕп геройсен ролĕсене Казах ССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисĕсемпе халăх артисĕсем выљаççĕ.

Фиљм валљи музыкăна казах композиторĕ орденоносĕц Жубанăв тата искусствăсен тава тивĕçлĕ дейателĕ М. Гнесин професcăр çыраççĕ.

„На границе“. „На границе“ фиљм пире Инçет-Хĕвелтухăçне илсе каять. Инçет-Хĕвелтухăçри чикĕре совет çыннисем Йапонипе Манчжури провокацийĕсен çивĕч лару-тăрувĕнче пурăнаççĕ. Тăшман вăрçă пуçарса йама хăтланать тата чикĕрен каçать. Пирĕн чаплă пограничниксемпе çывăхри колхозсенчи лайăх çынсем Йапонипе Манчжури бандичĕсене çĕмĕрсе çапмалах отпор параççĕ. Йухан шыв çыранĕ хĕрринче калама çук пысăк çапăçу пулса иртет: танксем, самољотсем, утлă çар, çуран çар ĕçе кайаççĕ. Йапонĕцсемпе манчжурĕцсем нумай тăкак кураççĕ, вĕсене аркатаççĕ. Пирĕн пограничниксем тепĕр хут Совет чикки çирĕп, шанчăклă сăрассипе питĕрĕнсе тăнине кăтартса параççĕ.

„На границе“ фиљма А. Иванов режиççор П. Павленкон „На востоке“ йатлă романĕн материалĕсем тăрăх лартать.

„Выборгская сторона“. Ку „Жизнь Максима“ йатлă трилогин виççĕмĕш тата йулашки серийĕ пулать. Картина пăхаканĕ фиљмăн малтанхи серийĕсенче кăтартнă геройсене курать.

Фиљма хăйсен сценарийĕ тăрăх Козинцĕвпа Трауберг режиççорсем лартаççĕ.

„Петр I“. Çитес вăхăтсенче „Петр I“ картинăн иккĕмĕш серийĕн постановкийĕ пуçланать. Иккĕмĕш сери Петр шветсене татăклă çапса çĕмĕрнĕ Полтаври историлĕ çапăçăва кăтартнипе пуçланать. Çакăн пекех картинăна пăхакан Азоври тинĕс çинчи Петр флочĕн тинĕс çапăçувне курать. Çак икĕ пысăк историлĕ сценăсене кăçалхи çура кăнтăрта ӳкереççĕ. Иккĕмĕш серире çĕнĕ çынсене кăтартаççĕ: шведсен королĕ Карл, Мазепа, Толстой тата ыт. те.

„Ленинградцы“. „Ленинградцы“ йатлă кинокартинă пирĕн вăхăтри кунсене кăтартать. Ку фиљм рабочи семйи çинчен, Ленинградри пролетариатăн мухтавлă револљуцилĕ традицийĕсем çинчен, пирĕн çамрăксем çинчен тата вĕсем çак большевикла традицисем тăрăх йепле вĕренсе пыни çинчен. Фиљмăн пĕр сценинче Ленинградри большевиксен нихçан манми сулпуçне Сергей Миронăвич Кировăа кăтартнă. Фиљма А. Зархипе И. Хейфиц режиççорсем лартаççĕ.

„Поединок“. „Поединок“ фиљм патша çарĕн пурнăçĕпе унăн йăлине кăтартать. Фиљм сценарине вырăсен паллă писателĕ А. Куприн ăн „Поединок“, „Дознание“, „Ночная смена“ т. ытти повĕçĕсем тăрăх Б. Голичниковпа Д. Папаригопуло çырнă. Картина Е. Гаринпа Х. Локшина çамрăк режиççорсем лартаççĕ.

* * *

Çитес вăхăтсенче „Ленфиљм“ киностуди „Ноябрь“ йатлă, (Н. Погодинăн сценарийĕ, режиççорĕ искусствăсен тава тивĕçлĕ дейателĕ С. Йуткевич) Октябĕрти Аслă револљуци хыççăнхи малтанхи кунĕсене кăтартакан, „Тихий Дон“ кинооперă (режиççорсем М. Йегорăвпа М. Шапиро) тата ытти фиљмсене те лартма тытăнать.

Киностуди советăн нумай сăрлă фиљмĕсене тăвас ĕçе пысăк тимлĕхпе тытăнать. Пĕлтĕр киностуди виç тĕслĕ гитропипла ӳкермелли совет меточĕн производствине алла илчĕ. Хаљ ССРС халăхĕсен пултарулăхне кăтартакан музыкăлă виç сăрлă чи пирвайхи фиљма кăларма хатĕрленет.

Ку фиљмра казаксен йурăсемпе ташăсен ансамбљне тата Лесгафт йачĕпе тăракан орденлă физкултурă институчĕн студисен коллективне ӳкереççĕ.

Чукунçул строителстви

57,8 километр хывнă

Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне 57,8 километр тăршшĕ лини хывнă. Шупашкар станцине çитиччен тата 43 километр хывмала.

Строителствăра халљхи вăхăтра кĕперсемпе, трубăсене тата чукунçула çурхи шывран сыхлас йенепе хĕрӳлĕ ĕç пырать. Шыв пăсма пултаракан вырăнсене чулсемпе çирĕплетеççĕ. Шывран сыхланна çĕрте усă курма 3 пин штук хăйăр тултарнă чăптасем участкăсене салатса панă. Кĕперсем патĕнче постсем организациленĕ.

Тата хастарлăрах ĕçлетпĕр

Ку таранччен манăн бригадă Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче рељсă сарнă çĕрте ĕçлерĕ. Мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа бригадăна урăх ĕçе,—шпал çумне рељсă çыпăçтарнă çĕре куçарчĕç.

Рабочисем ку ĕçе хăнăхман пулин те малтанхи кунсенчех хăйсен хастарлăхне кăтартрĕç. П. Кудрйашов, Р. Йемелйанăв, И. Дмитрийĕв йулташсем ĕç техникине алла çавăрса илчĕç те ĕнтĕ. Вĕсем халĕ лайăх примерсем кăтартса ĕçлеççĕ. Ĕçре пире Садов йулташ вĕрентсе пырать.

Манăн бригадă чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн вăйа хурса ĕçлеме обйазателствă илчĕ.

Бригадир — С. Тарасăв.

250 процент тултарнă

Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачĕпе тăракан колхозри 10-мĕш бригадă Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче лайăх ĕçлесе пырать. Ку бригадă мартăн 17-мĕшпе 20-мĕш кунĕсенче 49,6 кубла метр çĕр чавса плана 250 процент тултарчĕ.

Ĕçре уйрăмăнах Й. Çевастйанов, А. Толбайĕв, Н. Никифăрăв, М. Çмирнов йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Арк. Наумăв.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене илеççĕ

* Тулик Хураскинчи вăтам шкулта (Шупашкар районĕ) лотерей билечĕсене 500 тенкĕлĕх илнĕ. П. Матвейевпа Г. Иванов—25-шер тенкĕлĕх, С. Сергейĕв—30 тенкĕлĕх, Быкăв—15 тенкĕлĕх илнĕ.

Н. Оçипăв.

* Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе служащисем Осоавиахим лотерейĕн билечĕсене массăлăн илме пуçларĕç.

Д. Иванов.

ПАПАНИНĔЦСЕМ — КИЙĔВРА

КИЙĔВ, мартăн 31-мĕшĕ. Совет халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем, хăйулă пољарниксем — Папанин, Кренкĕл, Ширшов тата Федăрăв йулташсем Кийĕва килесси çинчен хыпар Совет Украинин столицинчи ĕççыннисем хушшинче çисĕмлĕ хăвăртлăхпа саралнă.

Хулăна ирех праçник чухнехи пек хитрелетнĕ. Пур çĕрте те хĕрлĕ йалавсем, партипе правителствă çулпуçĕсен, геройсен — папанинĕцсен портречĕсем, лозунгсем, Арктикăри пăрсен талккишĕсене çĕнтерекенсене саламласа çырнă транспарантсем. Куçса çÿрекен пăр çинчи „Çурçĕр пољусĕ" станцине ÿкерсе пысăк картинăсем тунă.

Ĕç пĕтнĕ хыççăн заватсенче, хапрăксенче, учрежденисенче ĕçлекенсем, студентсемпе вĕренекенсем, пионерсем йалавсемпе, портретсемпе чечексемпе мухтавлă геройсене кĕтсе илме вокзал патне пухăннă. Кийĕв хулинчи халăх вуншар пинĕн пойăс килсе çитиччен икĕ сехет малтан вокзал патне пыракан урамсене пырса тулнă, йĕркелесе тăнă.

Вокзалăн перронĕ çине предприйатисенчи стаханăвĕцсем, партипе совет тата профессиллĕ организацисен, пичетĕн представителĕсем тата ыттисем те пин çынна йахăн пухăннă.

6 сехет те 17 минутра пойăс перрон патне çитсе тăрат. Вакунран Совет Союзĕн геройĕсем Папанин, Кренкĕл, Ширшов тата Федăрăв йулташсем тухаççĕ.

Геройсене ăшшăн та савăнăçлăн саламлаççĕ. Кашнийех Арктикăра çĕнсе илнĕ мухтавлă çынсен аллисене чăмăртасшăн, хăйсен савăнăçне вĕсене каласа парасшăн. Геройсем хăйсене кĕтсе илекен йулташсемпе йĕрле хисеплĕ караул патне пыраççĕ. Полковник Афанасйĕв рапăрт парат: Унтан папанинĕцсем вокзал площачĕне тухаççĕ. „Урра" кăшкăрнă сасăсем оркестр сассипе пĕрлешсе кайаççĕ.

Площачĕре митинг пулса иртет. Украинăри Коммунисçен (бољшевиксен) Парти Тĕп Комитечĕн секретарĕн ĕçĕсене туса тăракан Бурмистенко, Украинă ССР ăслăлăхсен Академи президенчĕ академик Богомолĕц, поет-академик Тычина саламлă сăмахсем тухса каланă.

Совет Союзĕн Геройĕ И. Д. Папанин сăмах тухса каланине тăвăллăн алă çупса, саламсем каласа кĕтсе илеççĕ. Унтан Кренкĕл, Ширшов тата Федăрăв йулташсем тухса калаççĕ. Вĕсем чечеклепекен Украинăн столицинчи ĕççыннисене хăйсене ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн тав туса, çиĕр пăрсен талккишĕнчен, хăйар Арктикăра пулнă чухне партипе правителствăн аслă заданине, ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕн—тăван Сталинăн заданине пурнăçлас шухăш пире вăхăлантарса пычĕ, тесе калаççĕ.

Герой-папанинĕцсем вокзалран „Динамо" стадионне кайнă. Кийĕв хулинчи халăх урамсенче туллийех пулнă. Геройсене, вĕсем урампа пынă чухне, пĕтĕм халăх хавассăн саламласа кĕтсе илнĕ. „Динамо" стадионĕнче папанинĕцсем хулари ĕççыннисемпе, Украинă ССР-чи партипе правителствăн руководителĕсемпе курнăçса калаçнă.

Вокзал умĕнчи площачĕре тата хула урамĕсенче герой-папанинĕцсене Кийĕври çĕршер пин çын кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

Малта пыракан колхозсене премии панă

МУСКАВ, мартăн 29-мĕшĕ, (ТАСС). Çу тумали куљтурсен пысăк тухăçлăхĕшĕн колхозсем, бригадăсем звеносем 1937 çулта ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухнă.

ССР Союзĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕ 177 колхоза, 84 бригадăна, 107 звенона премиленĕ. Премии шучĕпе грузовой машинсем 43, çăмăл автомашинсем 15, укçан 1.527.800 тенкĕ параççĕ.

3.805 трактăр

Мартăн 31-мĕшĕнче Харькăври С. Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактăрсем тăвакан савăт коллективĕ гусеничнăй трактăрсем туса кăларас тĕлĕшпе квартăлти плана пурнăçа кĕртнĕ. Пысăк конвейĕртан икĕ пинĕмĕш трактăр аннă. Йулашки кунсенче конвейĕртен кашни кунах 62-шер трактăр антарнă. Пĕтĕмпе савăт 3.805 трактăр туса кăларнă.

Трактăрсем тăвакан цехри коллектив майăн 1-мĕшне 5.000-мĕш трактăр туса кăларма пулнă.

(ТАСС).

Укерчĕк çинче: Нанкинра пурăнакансем хулана Йапони интервенчĕсем пырса кĕрес умĕн урăх çĕре пурăнма кÿçса кайаççĕ

(Сойузфото).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Çурçĕр Китайра Шаљдун провинцинче хайар çапăçусем Таљцзинљ—Пукоу чукунçулĕ тăрăх тата унтан хĕвелтухăçнеле пулса пыраççĕ.

Йулашки вăхăтра Йапони çарĕсене хыттăн аркатса тăкнă пирки Йапони командованийĕ çĕнĕрен подкрепленисем йама ыйтнă. Йапонире Китайа тата пилĕк дивизи йама хатĕрленеççĕ.

Центрти фронтра пур районсенче те вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Ханчжоу патĕнче йапонĕцсем каллех Цайаљтан йатлă йуханшыв урлă каçма хăтланнă, анчах китайĕцсем вĕсем çине пулеметсенчен калама çук хыттăн пенĕ. Йапонĕцсем кайала чакнă. Вĕсен вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, 1.500 салтак пĕтнĕ.

Уху районĕнче йапонĕцсем Китай позицисем çине йăвăр артиллерирен переççĕ. Анчах Китай чаçĕсем хăйсен позицийĕсене çине тăрсах сыхлаççĕ.

(ТАСС).

Гуйде тĕленче пулнă сывлăшри çапăçу

Китай çарĕсен главнокомандуйушчийĕ Чан Кай-ши ларса пыракан самољота çак кунсенче Йапони истребителĕсем тапăннă. Таљцзинљ—Пукоу чукунçул патĕнчи фронта кăтартусем пырса хăварнă хыççăн, Чан Кай-ши Суйчжоуа вĕçсе кайнă, унпа пĕрле 14 истребител пынă. Гуйде районĕнче Китай самољочĕсене Йапонин 24 истребителĕ атакăланă. Сывлăшра хайар çапăçу пуçланса кайнă. Китай истребителĕсем Йапонин пилĕк истребителне персе антарнă, çакăн хыççăн Йапони ескатрилйи хăйĕн бази патнеле тарнă. Китайĕцсен икĕ самољот пĕтнĕ.

(ТАСС).

Англи пичечĕ Китайри фронтсенчи лару-тăру çинчен

Англи хаçачĕсем Китайри фронтсенчи лару-тăру çинчен статйасем пичетлесе кăларнă. „Таймс" хаçат, Китай çарĕсем Шаљдун провинцинче тунă çĕнтерÿсем çинчен пĕлтерсе, çапла çырат: „Йапони войенщчини хăй вăйĕнчен пысăк задачăна пурнăçа кĕртме пуçăнни курăнсах тăрат. Йапонĕцсем чылай çĕнтерÿсем турĕç, Китайăн хăшпĕр хулисене çĕмĕрсе тăкрĕç. Китай йалĕсене тустараççĕ, анчах вĕсем Китай çарне пĕтерсе хураймарĕç, Чан Кай-шин вĕçне çитиех кĕрешес çирĕп кăмăлне хуçаймарĕç".

(ТАСС).

Йут çĕршывсенче

●● Испанири çамрăксен социалисла пĕрлешĕвĕн дивизине хăйсен ирĕкĕпе кайма нумай çамрăксем хастарлăн çырăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе Аликанте хули малта пырат, унта „Хĕрлĕ Аликанте" текен батаљйона 1.500 çын çырăннă.

●● Мартăн 25-мĕшĕнче Чехословакире, вĕренÿ вăхăтĕнче, сывлăшра 450 метр çÿлĕшĕнче икĕ самољот хире-хирĕç çапăннă. Çĕреле ÿкнĕ чухне çамољотсем иккĕшĕ те çĕмĕрĕлсе саланса кайнă. Пĕр пилочĕ паращутпа сиксе çăлăннă, тепри—вилнĕ.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене илеççĕ

● Вăрнар районĕнче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене кăларнине Осоавиахим организацийĕсем питĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Йулашки кунсем хушшинче 14.000 тенкĕлĕх сарнă та ĕнтĕ.

Билетсене сарас çĕрте уйрăмах Вăрнарти зоотехникум кăтартуллă ĕçлесе пырат. Кунта лотерей билечĕсене илсенех Осоавиахим членĕсем, учителсем тата вĕренекенсем пĕрлешÿлĕ пуху туса иртерчĕç. Тухса калаçакансем пурте Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне кăларнине чĕрĕрен ытларĕç. Учителсем кашни 35—40 тенкĕлĕх илчĕç. Çапла 2 кун хушшинче техникумра 1150 тенкĕлĕх сарнă. Вĕсем Нурăс педучилищине ăмăртăва чĕнчĕç.

Йалсенчи колхозсем çумĕнчи Осоавиахим организацийĕсем лотерей билечĕсене пĕрремĕш хут илсе кайса салатнă хыççăн, тепĕр хут пыра-пыра илсе кайаççĕ. Ака Катăшри Михайлăв й. малтанхи хут 100 тенкĕ илсе кайрĕ. Вăл тепĕр кунне районри Осоавиахим советне пырса 50 тенкĕлĕх илсе карĕ. Укçине те хывса хăварчĕ.

Осоавиахимăн лотерей билечĕсене пур организацисемпе колхозсенче те пысăк хаваслăхпа илеççĕ.

Ст. Улангай.

● Тутаркас районĕнчи Осоавиахим организацийĕ, Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене 18500 тенкĕлĕх сарма обйазателства илнĕччĕ.

Район мартăн 29-мĕшне çав обйазателствăна пурнăçларĕ.

Районри ĕççыннисем лотерей билетне 18500 тенкĕлĕх илнĕ. Мăн-Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче 800 тенкĕлĕх сарнă.

Мăн-Сĕнтĕрти вăтам шкулти учителсем—Харитонăв, Матвейĕв йулташсем 100-шер тенкĕлĕх илчĕç.

М. Исайĕв.

● Йетĕрне районĕнче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсем хамăр çĕршывăн оборонă тĕрекне хăпартма пулăшнине ĕççыннисем тĕплĕн ăнланса илнĕ. Лотерей билечĕсене сарма йалсовечĕсемпе йалсовечĕсем, колхозсемпе колхозсем социалисăмла ăмăртăва тухрĕç. Çавна пула ултă кун хушшинче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене пĕтĕм районĕпе 15 пин тенкĕлĕх сарнă. Лотерей билечĕсене сарас ĕç малалла та вăйланса пырат.

Ник. Цветков.

879 тенкĕлĕх сарчĕç

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнче ĕçлекен рабочисемпе служăшчисем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене хаваслансах илеççĕ. Савăтра ĕçлекенсем хушшинче лотерей билетне йлменнисем пачах çук. Мелентйĕв, Лењовлĕ те сарăлсах пырат. рабочисем 20-шер тенкĕлĕх, Чумаков 15 тенкĕлĕх, Буинцовпа Морушкин йулташсем 20-шер тенкĕлĕх, Архипăв 24 тенкĕлĕх, Зимин 30 тенкĕлĕх илчĕç.

Лотерей билечĕсене илесси хале те сарăлсах пырат.

Анлăн сарăлса пырат

ТĂВАЙ. Районра Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне сарасси анлăн сарăлса пырат. Çак кунсенче халăх суденчи работниксем 100 тенкĕлĕх, почтă кантурĕнче ĕçлекенсем 100 тенкĕлĕх, парти райкомĕнче—400 тенкĕлĕх, вăтам шкулти учителсем—100 тенкĕлĕх, Тăрмăшри комсомол организацийĕçнче—200 тенкĕлĕх (комсорг Николайĕв йулташ), Чупайри комсомолĕцсем 450 тенкĕлĕх илчĕç.

Верхилейĕв.

Грузовик илчĕ

ТĂВАЙ. Вăрманхĕрринчи „Хĕрлĕ Сормăва" колхоз 47 центнĕр какай парса Канашри заготскотран грузовик илчĕ. Хаљ А. Архипăв комсомолĕца шофĕрсен курсне вĕренме йанă.

В. Илйин.

Ача çурчĕ

Шупашкарта, Атăлăн сулахай çыранĕнче, перевоз тĕлĕнче ача çурчĕ уçăлат. Ача çуртĕнче 120 ача вырнаçмала. Унта 8 çултан пуçласа 12 çулхисем, тăлăх ачасем пулаççĕ. Ачасене Çĕрпÿри тата Йетĕрнери ача çурчĕсенчен илсе килеççĕ.

Пайанхи кун тĕлне икĕ хутлă общежити, кухња тата служăшчисем ваљљи икĕ хутлă хватер çурчĕ туса лартнă. Хаљ мунча тата прачечнăй тăваççĕ.

Ача çурчĕ кăçалхи майăн 1-мĕшĕнче ĕçлеме пуçламала.

Трактăриссем хатĕрлекен курс

ЕЛĔК. Февраљ уйăхĕнчен пуçласа машинă-трактăрлă станци çумĕнче трактăриссем хатĕрлекен курс ĕçлет. Курсра мĕн пурĕ 60 çын вĕренет. Вĕсем пурте уйхир ударникĕсемпе стахановĕцĕсем.

И. Кутузăв.

Трахомран сываласçĕ

Вырăскас Пикшикри (Канаш р.) трахпунктра ĕçлекен Л. Варванинă трахработницă тăрăшса ĕçленипе 110 çынна трахомран сыватрĕ.

Ал. Мефодийĕв.

Хĕрарăм-активисткăсем суйлава хатĕрленеççĕ

РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне хатĕрленсе, рабочи Кисељов арăмĕ (Красный Сулин хули, Ростăв облăçĕ) хăй пурăнакан урамра хутла пĕлмен тата хутла сахал пĕлекен хĕрарăмсене шута илсе тухса, вĕсене вĕрентес ĕçе организациленĕ. Килхуçи хĕрарăмсем хаљхи вăхăтра хутла пĕлменлĕхе ăнаçлăн пĕтерсе пыраççĕ. Кисељов арăмĕ пуçарнипе йунашар урамсенчи килхуçи хĕрарăмсем суйлава лайăх хатĕрленес тесе пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеме договăр тунă.

Тепĕр активисткă Семсидйайĕвă йулташ килхуçи хĕрарăмсене ваљљи Сталинла Конституцине тата РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлав Положенине вĕренмели кружок организациленĕ.

Семсидйайĕвă йулташ йертсе пынипе килхуçи хĕрарăмсем тĕрĕ тĕрлекенсен кружокĕ, хор кружокĕ, хутла пĕлменлĕхе пĕтермели шкул организациленĕ. Унăн кружокĕнче вĕренекенсенчен хăшпĕрисем,—Михейĕвă, Семенихинă йулташсем—килхуçи хĕрарăмсем хушшинче массăлă ĕççем туса пыраççĕ. Хĕрарăмсем хăйсем умне—РСФСР Верховнăй Советне суйланă çĕре суйлавçăсене çĕр процент пĕтĕмпех пымала тăвас задачă лартнă.

(ТАСС).

Леваневский самољотне шырани

Мартăн 31-мĕшĕнче орденоносец-љотчик Мошковский йулташ тытса пыракан „Н-212" самољот Рудољф утравĕ çинчен Леваневский йулташăн „Н-209" самољотне шырама вĕççе кайнă.

Мошковский йулташ Гренландирен çурçĕр-хĕвелтухăç йенчи районă вĕçнĕ, мĕншĕн тесен куçса çÿрекен пăр „Н-209" самољота çак йеннеле илсе кайма пултарнă.

Йĕри-тавра лайăх курăннă, вăл 9 сехет хушши вĕçнĕ. Мошковский тĕрĕсленĕ районра „Н-209" самољотăн йĕрĕсене тупман.

Кĕскен

●● Мартăн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи металлургсем 54.930 тоннă хурçă шăратса кăларса плана 100,4 процент тултарнă. 45.523 тоннă прокат кăларса плана 110 процент тултарнă. Мартăн 30-мĕшĕнче 41.730 тоннă прокат кăларнă, плана 101 процент тултарнă.

●● Тури Атăлăн Калинин—Ржев участкинче шыв çулĕ уçăлнă. Калининран „Фурмăнăв" йатлă буксир пăрахутпа йăвăç тийенĕ баржă караванĕ тухнă.

●● Атăла Ленинградпа çыхăнтаракан Марински çиçтемăна—пысăк выран йышăнса тăракан шыв магистраљне кăçал тĕпренех йусаççĕ.

●● Ленинградри атă-пушмак çĕлекен „Скороход" хапрăк квартăлти программăна тултарнă. 5 мĕлйун та 682 пин мăшăр атă-пушмак туса кăларнă.

(ТАСС).

Çергей Йалавин

УХСАЙ ЙАККĂВĔН ПУЛТАРУЛĂХĔ

(„Туй" пирки)

„Туй" йатлă поеминче Ухсай Йаккăвĕ „Нарспи"-рен икĕ йĕрке илсе епиграф лартнă: „Акă туй та çакă туй, пирĕн туйсем çаплала". Ку ахаљтен мар. Автăр кунта çĕнĕ туйпа çĕнĕ Нарсписене кăтартасшăн. Кăтартасшăн çеç мар, хăйĕн умне лартнă задачине вăл пултарулă пурнăçланă.

Чăвашсен классикĕ Константин Иванов хăйĕн чаплă поемине çырнăранпа тĕнчере нумай „шывсем йухрĕç", чылай вăхăт иртрĕ. Пĕтĕм тĕнчере кисретекен револљуци, кивĕ Российăна никĕсĕпех, тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнетрĕ. Коммунисçен партийĕ, çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе ĕçхалăхĕ пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерекен улшăнусем, çав тери пысăк çитĕнÿсем турĕ. Хаљхи Нарсписем, Сетнерсем колхозсенче трактăриссем, комбайнерсем, бригадирсем пулса, колхоз председателĕнче т. ыт. вырăнсенче те тăрăшса ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн орденсем илеççĕ. Пĕтĕм тĕнчене хăйсен ĕçĕсемпе, хастарлăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Çавсем çинчен çырат Ухсай хăйĕн „Туй" йатлă поеминче. Ĕлĕкхи Нарсписемпе Сетнерсем тискер саманара нуша курса пурăннă. Хаљхи Сетнерсем ирĕклĕ пурнăçра мĕнле пурнаççĕ, мĕнле тытаççĕ хăйсене, мĕнле авланаççĕ вĕсем, вĕсен ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем мĕнле,—çавсене кăтартса парат „Туй" автăрĕ.

„Иваљук Мĕтри вăранчĕ
Хĕвелтен те ирттерех (!!),
Тăрсанах вăл çамрăк каччă
Физкуљтурă иртерет.
Акă радио пайан та
Мускавран вĕççе килет,
Уççăнах парат командă:
— Пĕрре, иккĕ, виççĕ!—тет.

Çак икĕ стйофари сăнлăхсем колхозник Мĕтри мĕнле пурăннине аван кăтартаççĕ. Мĕтри пурнăçĕнче — тасалăхпа тутăлăх, вăл „саванат çĕмĕрт сачĕ умĕнче". Мĕншĕн саванни çинчен кайарахпа калăпăр, халĕ акă мĕне астутарса хăварас тетпĕр: автăр пурнăçа аванах сăнанă, чи кирлĕ детаљсемпе пысăк та илемлĕ картинсем кăтартма пултарнă. Вуланă чухне çакна куратăр: „Мĕтрин ўчĕ пăхăр çамавар пек"—вăйпитти, сывă çын, унăн „шчиплечĕ сар ăсан чĕппи пек шиплетет". Йе тата çу хĕвелĕ унăн „çип çăмхи пек пĕлĕт тăрăх кустарат": „йăмăх тĕрлĕ çутă çипĕ (пайăрки) çÿтĕлсе текех тăрат" т. ыт. те. Ун пек вырăнлă сăнлăхсемпе танлаштарусем унăн поеминче сахал мар.

Астăватăр пулĕ: „Йал вĕçĕнче, Тукасра пĕчĕкçеççĕ пÿрт ларат. Амăшĕпе çак пÿртре Сетнер ача пурăнат". Унăн мĕнмĕн пулнине те астуса илĕпĕр: „Вата карчăк амĕш пур, вĕри чунлă чĕри пур, пуйан ĕçне ĕçлеме икĕ вăйлă алли пур" („Нарспи").

Хаљхи Сетнерсен, çав шутрах Иваљук Мĕтрин („Туй") поемăри тĕп геройĕн мĕн-мĕн пур; „Сăлăп йанă алăк витĕр пăхакан шеп йăрă кăмăллаççĕ пурте питĕ „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозра. Мĕншĕн тетесен, тупăшса вăл Ака-туй сăнне курет. Çак ăратлă йăрпа Мĕтри хĕр пăхма ĕлĕкхи пек каласан, хĕр сураçма кайат, унпа пĕрле йевче Мĕкĕте колхозник пырат. Мĕкĕте вунă çул хушши ĕнтĕ колхоз председателĕнче ĕçлет, пайан вăл Мĕтрипе хĕр сураçма тухса кайрĕ.

Вырăсла хапха йар карĕ
Шăнкăрчи те шăхăрат.
Тусеймерĕ йантăрарĕ
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав...

Сюжетлă произведени автăра чылай йенĕпе пулăшат. Ухсай вăл меслетсемпе усă курма пĕлнĕ: герой пынă çул тăрăх вулакансене темĕн те пĕр кăтартма пултарат: тĕлпулусем унта, пейзаж, пуçа килнĕ шухăшсем, тĕрлĕрен курăнусем т. ыт. те. Автăр вĕсене „ĕçе кĕртетех". Çапла майпа хаљхи колхозлă йала, унăн ытарайми çыннисене илемлĕ сăнлăхсемпе сутатса парат:

„Акă колхоз уйĕ
Акăш ларнă пек, шапшурă
Лăпкăм-лăпкăм хуратул,
Чăшăлах ўсет сатурăн
Тулă—пулĕ хăпарту.
Пит аван, Мĕтри Иваљĕн,
Йешĕл уйхирпе кайма,
Умăнта çырла йăванĕ,—
Çулçă çунĕ хурама".

Савăнат Мĕтри Иванăч, анчах вăл хăй ĕçне манмасть, çул майĕ вăл пиччĕшне туйа килме йыхрав йарса хăварат. Пиччĕшĕ унăн—вĕçевçĕ.

Ухсайăн кашни сăввинчех йалпа хула тачă çыхăнса тăраççĕ. Колхоз пурнăçне çырнă чухне вăл хулана манмаст, хула пурнăçне кăтартнă чухне йала аван астăват. Çапла кирлĕ те ĕнтĕ вăл.

Çапла ĕнтĕ пирĕн чаплă бригадир Мĕтри Иванăч чул шоççелĕ çулпалан хĕр сураçма кайрĕ. Колхоз туйа хатĕрленет: „Мирун инкен икçĕр çитмĕл икĕ кукăль пиçнĕ, пÿртсен урайĕ хулари пекех таса хĕрĕх витре кĕрекен тимĕр кăшăллă пичкепе сăра тултарнă, çамрăксем тытаççĕ пулă, сĕтĕреççĕ сĕреке, лавкара хĕрсем илеççĕ супăњпа оде-колон, шăпăрçă хĕлĕхсем хатĕрлет, вăхăта питех кĕтеççĕ:— хăçан çитĕ туйлă кун?".

Ачасем шăхлич тăваççĕ йешĕл варăш кĕпçинчен, шăратса вĕсем йурлаççĕ улăхри илем çинчен.

„Пит аван иккен çĕршывĕ,
Пыл шăршийĕ—таврара.
Айлăмри вăлакăн шывĕ
Йăлтăр-йăлтăр йăлтăрат.

Кĕрмеклĕ йалĕнчи „КИМ" колхоз та начар мар. Вĕсен такăр çулĕсем çинче çип çăмхи илсе кустармала, хулари пекех ку йалăн, пур урамĕ те чипер, лапсăркка лутра йăмралăх ларнă икĕ айаккипе. Сурхи кунăн ăшă çилĕпе апат шăрши çĕкленчĕ. Çатмасем çинче икерчĕ, тарилке тулли сар çу, хурантан автан тукмакĕ кĕреке умне килет". Питĕ пуйан пурăнат „КИМ" колхоз.

Йевчĕпе хĕр ашшĕ калаçнă хыççăн йулашкинчен çамрăксене сăмах параççĕ: „калаçса çитет пуљ халĕ, çамрăксем хăйсем мĕскер калĕç, пултăр вĕсен ирĕкĕ" Мĕншĕн тесен, „хăвăрах ĕнтĕ пĕлетĕр саманамăр урăхне". Йуратат хаљ çамрăк каччă кăмăлне килен хĕре". Çак йĕркесемпе автăр çамрăксен ирĕклĕ те илемлĕ пурнăçне аван кăтартса панă.

„Савăшса пĕрле пурнасшăн
Чашăк-тирĕк сума мар:—
Ĕмĕрлĕх тус пулĕ маншăн
Ĕç ăстийĕ колхозра".

Малала вара автăр „КИМ" колхоз пурнăçне, хаљхи çĕнĕ туйа çав тери килĕшўлĕ сăнлăхсемпе кăтартса парат.

Килĕшўлĕ сăнлăхсемпе илемлетсе çырнă, лайăх ăшчиклĕ поемă. Вăл колхоз пурнăçне тĕрĕссĕн кăтартса панă:

„Пирĕн колхоз хаљ малта
Тата малта пуласчĕ.
Хамăр пĕчĕксĕ йата
Сталин умне хурасчĕ".

тесе йурлаççĕ пуса-каччисем, мĕншĕн тесен, вĕсем чаплă бригадирĕн „кăкăрĕ çинче ахаллĕн чаплă орден тăмĕччĕ ахаљтен мухтавлă Сталин кăмăллăн алпамăччĕ" (кăçалхи хĕлле бригадир Мĕтри Иванăч Мускавра пулнă).

Туй халăхĕ савăнса йурланă вăхăтра инçетрен аероплан сасси илтĕнсе кайат. Вулакан астăват пулĕ, Мĕтри Иванăч „КИМ" колхоза хĕр сураçма кайнă чухне вĕçевçĕ пиччĕшĕ патне телеграм йарса хăварнăччĕ. Халĕ пиччĕшĕ аеропланпа çитрĕ те „лĕпĕш пек шур парашутпа улăх тăрăх йаранчĕ". Туй халăхĕ тĕлĕнет, Мĕтри пиччĕшĕ килессе кĕтет. Çав вăхăтрах кĕрўпе туй пуçĕ харăс чуптăраççĕ сиккипе".

Пур тăван та пуçтарăннă, шăкăлтатса калаççа, савăнса йурласа, тăрăс-тăрăс ташласа колхозра туй тăваççĕ. „Сарă сăрлă хыр урайĕ авăнат те кисренет Йурласа кăмăл тăвар—ташласа йарас килет",—теççĕ туй çыннисем. Ватти-вĕтти пĕрлешнĕ, ăмăртса калаççĕ халĕ кивĕ шăпăрпа ройаљ.

„Туй" поемăра çитменлĕхсем те пур, стилĕ пĕр пек йака мар, хăшпĕр танлаштарусем килĕшўсĕр, вырăнĕ-вырăнĕпе ритмă та ухсахлат т. ыт. те.

Пирĕн шутпа, пиччĕшĕ парашутпа аннă хыççăн, ун çинчен кирлĕ таран сутатса памалăх пулнă: мĕн шухăшлат вăл? Ăна та сăмах парса хăй пурнăçĕ çинчен кĕскен те пулин калаттармала пулнă. Поемă темле йурласа пĕтермен йурă пек кĕтмен çĕртен... сасартăк вĕçленет. Çакăн пек çитменлĕхсем пулсан та, поемă Ухсай пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Ухсай Йаккăвĕ пысăк утăмсем турĕ, ăна малалла ўсме пулăшас пулат.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн Тутар республикинчи Турисăмпа Екскурçи Управленийĕ

Пĕтĕм Союзри тата вырăнти (Тутар республикинчи) турисăмпа екскурçилĕ маршрутсемпе—Кавказа, Крыма, Ленинграда Хура тинĕс хĕррисене, Хусана (5 кунлăх) т. ыт. те кайма путовкăсем пама договăр тума пуçланă.

Зайавкăсене Чăваш республикинчи пур Союзсен обкомĕсене те (Союзсен çурчĕ) „Тутар республикинчи Турисăмпа Екскурçи Управленин представителĕ ваљљи" тесе паллă туса памала.

Зайавкăсене пур учреждени-сенчен те тата уйрăм çынсенчен те илеççĕ.

Представител 1938 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕчен пулат.

Чăвашсен Государствăлă Издателствине БУХГАЛТĔР тата СЧЕТОВОД кирлĕ.

Пичет çурчĕ, 4-мĕш хутлăх.

Аслă бухгалтĕр патне пымала.

ДИРЕКЦИ.

3—2

Шупашкарти Водопровод кантурĕ

Шыв будкисенчен шыв иленкенсене

Шыв илме абонемент кĕнекисем илме сĕнет.

Кĕнекесене „Водосветăн" абонент сĕтелĕнче сутаççĕ.

Кăтартма çурт кĕнеки илсе пымала.

„*Водоканализаци*" *тытăмĕ.*

8—2

Шупашкарти Спирт савăтне шут ĕçче пĕлекенсем кирлĕ.

2—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 164 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. ½—1 п. л.